К 84.89(=Чув)
Я47
Ч-42910

Иван Яковлев



# Ҫитĕнĕ вăхăт

Национальная библиотека ЧР
4-042910

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

ИВАН ЯКОВЛЕВ

Я47

# Çитĕннĕ вăхăт

## Асаилӳсем

Чăвашла *Г.Ф. Юмарт* куçарнă



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2010

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2Рос=Чув)6-4
Я 47

ПРОВЕРЕНО
2010 06 СЕН 2017

**Яковлев И.Я.**
Я 47 Çитĕннĕ вăхăт: Асаилӳсем / Яковлев И.Я.; чăвашла Г.Ф. Юмарт куçарнă. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2010. — 63 с.
ISBN 978-5-7670-1706-5

Кĕнекере чăвашсене çутта кăларакан И.Я. Яковлевăн ачалăхне, шкулта вĕреннĕ тапхăра уçса панă. Чăвашсен пурнăçне, йăли-йĕркине тимлĕ сăнать вăл, юрри-ташшине итлесе-курса киленет. Гимназире вĕреннĕ чухне тăван халăх валли çырулăх йĕркелесси пирки сĕмленме тытăнать.

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2Рос=Чув) 6-4

и-42910
Национальная библиотека
Республ...

ISBN 978-5-7670-1706-5

© Юмарт Г.Ф., куçару, 2010
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2010



## КУҪАРАКАН СӐМАХӖ

Иван Яковлевич Яковлева (1848—1930) Чӑваш Республикинче ҫеҫ мар, Раҫҫейре, унӑн тулашӗнче те аван пӗлеҫҫӗ, сума сӑваҫҫӗ. Вӑл — чӑваш халӑхне ҫутта кӑларакан, хальхи ҫырулӑха никӗслекенӗ. Иван Яковлевич уҫнӑ Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнчен чылай паллӑ ҫын вӗренсе тухнӑ.

«Чӑваш хресченӗсем аслӑ ҫул пуҫӑмӑра «ҫутта кӑларакан», «ӑс паракан», «пирӗн ырӑ ҫыннӑмӑр» тесе чӗннӗ, вӑл уҫнӑ шкулӑн ӗҫӗсене пысӑка хурса хакланӑ. «Чӑваш шкулӗ пирӗншӗн хӗвел ырӑнне пулчӗ», «Чӑваш шкулӗ хресчен куҫне уҫрӗ» тенисем халиччененех упранса юлнӑ. Чӑвашсен ҫӗнӗ ҫырулӑхне йӗркелени, кӗнекесем пичетлеме пуҫлани халӑх кун-ҫулӗнче питех те пӗлтерӗшлӗ».*

И.Я. Яковлев пирки ӑсчахсем чылай ырӑ сӑмах каланӑ. Аслӑ ҫул пуҫӑмӑрӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ, вӑл йӗркелесе ҫур ӗмӗр ытла ертсе пынӑ Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ пирки ҫырнисем нумай-нумай документра палӑрса юлнӑ. Вӗсем пирӗн ҫӗршыври, Англири тата ҫӗр чӑмӑрӗн ытти кӗтесӗсенчи архивсенче халӗ те упранаҫҫӗ. Анчах та чи пахи пирӗншӗн — Яковлев асаилӗвӗсем, уйрӑм кӗнекен 1997 ҫулта ырӑсла пичетленнӗ. Эсӗ, хисеплӗ вулаканӑм, алӑра тытакан илемлӗ кӑларӑма та ҫав кӗнекене тӗпе хурса хатӗрленӗ.

---

* *В.П. Никитин (Станьял).* Чӑваш литературин. 8-мӗш класӑн вӗренӳпе вулав кӗнеки. Ш., 2003.

«Çитĕннĕ вăхăт» кĕнекене мухтавлă вĕрентекенĕн ачалăхĕпе çамрăклăхĕ çинчен калакан сыпăксене кĕртнĕ. Вулама тата ăнланма çăмăл пултăр тесе асаилӳсене кĕскетнĕ, пуплевне ансатлатнă. Кунта пурĕ тăвата пай, кашни сыпăкĕ — хăйне евĕр пĕчĕк калав.

Яковлев кулленхи пурнăçа мĕн ачаран тимлĕ сăнаса ӳснĕ: вăл вăхăтри чăваш апачĕ, пӳрчĕ, йăли-йĕркине çутатса пани сире, çамрăк ăрăва, иртнĕ ĕмĕрсенчи чăвашсен кун-çулне туллинрех курма май парать. Уйрăмах чăваш юрри-кĕвви, ташши тыткăнлаççĕ ăна. «Гимназире» пайра пулас педагог чăвашсем валли ятарласа шкул уçас шухăш епле тĕвĕленнине, çак шухăш мĕне пула çуралнине интереслĕ те ĕнентерӳллĕ каласа панă.

Иван Яковлевăн тăрăшулăхĕ, çирĕп кăмăлĕ çамрăк вулакансемшĕн ыра тĕслĕх пулса тăчĕ. Вăл ачаранах тăван халăха, чĕлхене, культурăна юратма, тытнă тĕллев патне çирĕппĕн утма хавхалантарса тăрать.

# Ачалăхăм





## МАНĂН ÇЕМЬЕ

Эпĕ Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Кăнна Кушкинче, Чĕмпĕртен пĕр утмăл çухрăмри ялта, çуралнă. Ялта пурте чăвашчĕ.

Манăн аннене Наçтаççи тесе чĕннĕ. Вăл эпĕ çуралсан иккĕмĕш е виççĕмĕш кунне ирхине вилсе кайнă. Хушаматăмпа атте ятне мана тĕне кĕртнĕ чух Яков Яковлев хреснатте тăрăх çырса хунă. Вăл хресчен пулнă. Манăн хреснанне — Кăнна Кушкинчен икĕ çухрăмра вырнаçнă Салмановка ялĕнчи хресчен хĕрарăмĕ.

Аннен хуçалăхĕ вăтамччĕ, çурчĕ сад-пахчасăрччĕ. Ăна вăл хăех тытса тăнă. Пӳрчĕ ытти чăвашăнни пекехчĕ — пĕчĕк чӳречеллĕ, ытла таса марччĕ. Мансăр пуçне аннен тата виçĕ ачаччĕ: аслă ывăлĕ Йăван — ман пиччем, иккĕмĕшĕ те ывăлччĕ, анчах ун ятне астумастăп, хĕрĕ Кулине — манăн аппа. Вăл манран вунă çул патнех аслăччĕ. Тăваттăмĕш ачи эпĕ.

## УСРАВ ЫВĂЛ

Йăла тăрăх, чăвашсен çемьере ывăл кирлĕ пулнă. Вăл пулмасан тăванĕсенчен е ют кил-йышран ывăл ача усрава илнĕ. Эпĕ тăлăха юлсан мана пирĕнтен утмăл-çитмĕл чалăшра* пурăнакан удел хресченĕсен — Пахомовсен (Кирилловсен) — кил-йышĕ усрава илнĕ.

Пĕчĕкскере, мана кăкăр сĕчĕ кирлĕ пулнă, Пахо-

* Чалăш — хальхи виçепе 2,134 м.

мовсен килӗнче вара анне вырӑнне ӗмӗртекен никам та пулман. Ҫуралнӑ ҫуртӑма хирӗҫ урам урлӑ чӑваш хӗрарӑмӗ, Суеҫӗ Хӗветӗр хресчен арӑмӗ, пурӑннӑ. Вӑл мана шеллесе ӗмӗртнӗ. Уншӑн нимӗн те ыйтман. Чӑвашсем хушшинче ҫакӑн пек пулӑшни тӗлӗнмелле ӗҫ шутланман. Ачасем тӑлӑха юлсан вӗсене килсерен салатнӑ та тӑван ывӑл-хӗрӗпе тан пӑхса ӳстернӗ. Чӑвашсем ашшӗ-амӑшӗсӗр юлнӑ вырӑс ачисене те усрава илнӗ.

Суеҫӗ Хӗветӗрӗн арӑмӗн сӑнне кӑшт астӑватӑп-ха. Кайран эпӗ Кӑнна Кушкине таврӑнмассерен ӑна тӑтӑшах кураттӑм. Ача чухне вӑл хӗрарӑм мана мӗн тери ырӑ тунине ӑнланман эпӗ, ӳссе ҫитӗннӗ вӑхӑтра вара ӑна сахал тӗл пула пуҫларӑм. Ҫитӗнсе ҫитсен хама кӑкӑр ӗмӗртнӗ хӗрарӑма мӗнле те пулин питӗ ырӑ тӑвас килетчӗ. Анчах вӑл вилсе кайрӗ те, эпӗ ӑна тивӗҫлипе тав тӑваймарӑм.

## ЧӐВАШ АПАЧӖ

Малтанах эпӗ лутра, чирлешке, имшер, вӑйсӑр, чӗмсӗр ачаччӗ. Ку вӑл, тӗпрен илсен, Пахомовсен килӗнче апат ҫителӗксӗр пулнинчен те килнӗ. 1864—1865 ҫулсенче ҫеҫ чипер, йӗркеллӗ ӳсме тытӑнтӑм.

Тата ҫакна та асӑнса хӑвармалла: эпӗ ача чухне чӑвашсен апачӗ начарччӗ. Ку вӑл чухӑн пурнӑҫран та, тӗрлӗ тӗшмӗшпе йӑла-йӗркерен те килнӗ. Ун чухнехи ялсенче чӑвашсен выльӑх-чӗрлӗхӗ хуҫисенчен тутӑрахчӗ, ҫыннисем вара ҫити-ҫитми пурнӑҫпа тертленетчӗҫ. Аш-пӑша апата сайра яратчӗҫ: Питрав тӗлӗнче, кӗркунне, пысӑк уявсем чухне кӑна. Какай уйрӑмах хӗлле сахал лекетчӗ. Вӗсен яланхи ҫимӗҫӗ — ӳсентӑранран хатӗрленӗ апатчӗ. Ытларах чухне — ҫӑкӑрпа тӑварччӗ. Улма, йӳҫӗтнӗ купӑста ярса, хӑш-пӗр чух квас хушса яшка пӗҫеретчӗҫ. Унсӑр пуҫне ыраш нимри е ыраш пӑтти пӑсланатчӗ сӗтел ҫинче. Чи лайӑх апата, паллах, хӑна-вӗрле умне лартнӑ.

## ПАХОМОВСЕН КИЛ-ЙЫШĔ

Пахомовсен килĕнче тĕкĕр çукчĕ те, эпĕ хамăн сăнăма çăлри шыв çинче пăхаттăм, хама хам вара чăлах çын пек кураттăм.

Кăнна Кушкинче пурăннă чух манăн хресчен ачисен хушшинче пĕр пысăк тус пурччĕ, Иван ятлăччĕ вăл. Унăн ашшĕ — Матви чăвашчĕ. Çак Иван манран çичĕ-сакăр çул аслăччĕ. Матвисен утарĕ Пахомовсеннипе юнашарччĕ. Тусăмпа иксĕмĕр çапла выляттăмăр: çывăхра ӳсекен хурамасен виçĕ хăлаç çӳллĕшĕнчи турачĕсене пĕр-пĕринпе çыхаттăмăр та çывăрма вырăн тăваттăмăр, хăш-пĕр чухне унтах çĕр каçаттăмăр, çăлтăрсене сăнаттăмăр. Эпĕ хайхи Иван шутласа кăларнă хăрушă юмахсене итлеме юрататтăм.

Хама усрава илнĕ аннеме астумастăп: эпĕ усрав çемьере пурăнма пуçласан виçĕ çултан вăл çĕре кĕнĕ. Унăн ятне те, хушаматне те калама пултараймастăп. Çакна çеç пĕлетĕп: вăл та, тăван аннем, пиччемпе аппам пекех, удел хресченĕ пулнă. Усрава илнĕ аннемĕн малтанхи упăшкинчен манран çичĕ-сакăр çул аслă Униççе ятлă хĕрĕ пурччĕ. Вĕсем иккĕшĕ мана питĕ юрататчĕç. Униççепе эпир туслăччĕ.

Усрава илнĕ Якур аттем (тепĕр майлă ăна Энтри тетчĕç) иккĕмĕш анне вилсен тепĕр хут авланчĕ. Эпĕ ун чухне пиллĕкреччĕ. Йăла тăрăх, чăвашсен икшер ят пулать. Пĕрне пуп шыва кĕртнĕ чух парать, теприне килте хураççĕ. Чăвашсем çыннăн пĕр ят çеç пулсан вăл нумай пурăнаймасть, икĕ ятлин ĕмĕрĕ вăрăм пулать тесе ĕненеççĕ. Манăн вара иккĕмĕш ят çук.

Энтрие эпĕ ялан атте тесе чĕннĕ, хама усрава илнĕ хĕрарăма анне теттĕм. Пахомовсен килĕнче усрава илнĕ аттемĕн Якур-Энтрин амăшĕ Алтатти тата атте ашшĕ Паххум, суккăрланнă ватă, пурăнатчĕç. Эпĕ вĕсене асанне тата асатте тесе чĕнеттĕм.

Пахомовсен кил-çуртне тăван кил тесе шутлатăп.



Мана вӗсем кӳрентерместчӗҫ, тӑван ачине пӑхнӑ пекех пӑхатчӗҫ. Чылай вӑхӑт Пахомовсем манӑн тӑван ҫемье маррине пӗлмесӗр пурӑнтӑм. Эпӗ чӑннипе камӑн ачи иккенне вӗсем ним те шарламастчӗҫ. Вун ҫиччӗ тултарсан кӑна, хам гимназире вӗреннӗ вӑхӑтра, хӑҫан ҫуралнине кӑтартакан хута курсан ку кил-йыш маншӑн чӑн атте-анне килӗ маррине пӗлтӗм.

## АМА ҪУРИ АННЕМ

Ама ҫури аннем — Якур-Энтри Пахомовӑн иккӗмӗш арӑмӗ — Кӑнна Кушкинчи хресчен кил-йышӗнченччӗ. Эпӗ ӑна анне тесе чӗнеттӗм. Ытти ҫемьери пекех, шӑв-шавсӑр пулмастчӗ. Пӗр вӑхӑтра ама ҫури аннем, Наҫтаҫҫи аппам тата мана юратакан Алтатти асаннем хушшинче кӑмӑлсӑрлӑх саманчӗсем сиксе тухатчӗҫ. Ку вӑл ытларах ман пирки пулатчӗ. Ама ҫури

аннене вӗсем мана, усрав ачана, тӑван ачисемпе пӗр тан пӑхманшӑн, начар тумлантарнӑшӑн тата ыттишӗн те ятлатчӗҫ, ӳпкелетчӗҫ.

## КУЛИНЕ АППАМ

Манӑн тӑван аппам Кулине 1858—1859 ҫулсенче качча тухрӗ. Пахомовсем патӗнче пурӑннӑ пирки ҫиччӗ-саккӑрта чух ун патне эпӗ сайра ҫӳренӗ. Аппа тӑван анне килӗнче, хам ҫуралнӑ ҫуртра, пурӑнатчӗ. Кулине мана кучченеҫлӗх мӑйӑр пара-пара янине астӑватӑп.

## ЙӖРӖХ

Кӑнна Кушки ҫыннисем ячӗшӗн ҫеҫ тӗне кӗнӗ тесе шутланнӑ. Тӗрӗссипе вӗсем авалхи тӗне ҫирӗп тытса пынӑ. Пуп патне ачасене шыва кӗртме е урӑх ӗҫе тума кӑна ҫӳренӗ. Авланнӑ, виле пытарнӑ чухне е ытти вӑхӑтра авалхи йӑласене пӑхӑннӑ. Пӳртри кӗтесе турӑшсем ҫакнӑ пулин те унта вӗсене ячӗшӗн ҫеҫ усранӑ, ҫавӑнпа турӑшӗсем хӑрӑмпа, тусанпа, эрешмен картипе витӗнсе тӑнӑ.

Чӑвашсем ҫурт-йӗрте хӑйсем ӗлӗкрен пуҫҫапакан япаласене тытнӑ. Пахомовсен сивӗ кӗлетӗнче, сӑмахран, йӗрӗх пурччӗ. Йӗрӗхӗ пӗрнере упранатчӗ, хайхискерне татӑкпа витнӗччӗ. Хам эпӗ ӑна пӗрре те курман. Ку вӑл усал сывлӑш пек шутланнӑ. Киле-ҫурта телей кӳтӗр, инкек-синкекрен хӑтартӑр тесе чӳклесе ҫырлахтарнӑ. Ун пекки ытти килте те пулнӑ. Этем кӗлетки пек те марччӗ йӗрӗхӗ, тӑхлапа йывӑҫ татӑкӗ ҫеҫ теме пулатчӗ ӑна.

## ПУП

Кӑнна Кушки ҫыннисем пупа кӗлӗсем туса ирттернӗшӗн (лешӗ ял тӑрӑх ҫӳренӗ вӑхӑтра) ҫӑмарта е ытти ҫиме паратчӗҫ. Пупӗ кӳршӗ ялтан ҫулсерен темиҫешер хут килетчӗ. Вӑл чӑвашла калаҫмастчӗ. Чӑваш-

сем вара нумайӑшӗ вырӑсла пӗлместчӗҫ. Ялти хӗрарӑмсемпе ача-пӑча пачах ӑнланмастчӗҫ. Калаҫасса та арҫынсенчен кам та пулин пӗри калаҫатчӗ. Пысӑккисем чиркӗве питӗ кирлӗрен ҫеҫ кӗрсе тухатчӗҫ. Пӗчӗккисене вара унта Мӑнкунта ҫеҫ илсе каятчӗҫ.

## АСАТТЕ

Кӑнна Кушкинче эпӗ саккӑра ҫитиччен пурӑнтӑм, ун хыҫҫӑн мана Пӑрӑнтӑкри шкула вӗренме ячӗҫ. Ку ял тӑван кӗтесрен сакӑр ҫухрӑм хӗвел анаҫнерехчӗ. Удел хресченӗсен хутла вӗренмеллеччӗ. Пахомовсен килӗнче пурӑннӑ чух эпӗ суккӑр Паххум асаттене юрататтӑм. Вӑл сайра хутра инҫетри, пӗр ҫирӗм ҫухрӑмри, кӳршӗ ялсенчи тӑванӗсем патне каятчӗ. Ун чухне эпӗ ӑна патак вӗҫне тыттарса ертсе ҫӳреттӗм.

Асаттене хӑйсен утарне те илсе каяттӑм. Унта вӑл ҫӑпата туса айланатчӗ, пыл хурчӗсем сӗрленине итлеме юрататчӗ. Ҫапла пӗрле ҫӳресси ман кӑмӑла питех каймастчӗ ӗнтӗ, ҫапах ватӑ ҫынна пӑрахса хӑварма, ирӗкелле чупма ҫукчӗ. Пӗрре эпир унпа ярминккене кайрӑмӑр. Эпӗ асаттерен чылай уйрӑлса утнӑччӗ. Ун патне таврӑнтӑм та вӑл мана хӑй ҫӳрекен туяпа темиҫе хутчен хыттӑнах мар ҫапса илчӗ.

Тепрехинче мана каллех ярминккене илсе каясшӑнччӗ. Анчах ҫӑпатамсем ҫӗтӗлсе пӗтнӗччӗ. Ярминккене ҫӗтӗк-ҫатӑкскерне сырса кайма намӑс пекчӗ. Эпӗ йӗрсе ятӑм та пӗрле пыма килӗшмерӗм.

Сӑлтавне пӗлсен мана вӗр ҫӗннине тупса пачӗҫ те эпир ҫула тухрӑмӑр. Кӗҫех эпӗ ҫӑпата хуҫма вӗрентӗм, хитрех тухаймастчӗ пулин те хама валли те, ыттисем валли те тӑваттӑм.

Пӗрре мана икӗ пус укҫа панӑччӗ. Чӑвашсен уявра пӗчӗккисене укҫа парнелесси йӑлараччӗ. Ҫав укҫапа мана пасара илсе кайрӗҫ. Така тирӗнчен ҫӗлетнӗ кримски ҫӗлӗк кӑтартаҫҫӗ. Ӑна хам та хаваспах илнӗ пулӑттӑм, анчах икӗ пуспах туянма ҫук. Акӑ премӗксем

сутаççĕ: пĕри хĕрлĕ, тепри шурă, тата урăх йышши. Мана пĕри сахал, пур тĕрлине те илес килет. Иккĕленсе тăтăм-тăтăм та юлашкинчен пачах урăх япала туянтăм.

Асаттене ертсе çӳренĕ пирки тата Пахомовсен килĕнче ĕçе лайăх хăнăхса çитнĕрен (сӳрелеттĕм, утă çулаттăм, тырă выраттăм) мана Пăрантăкри шкула вĕренме ярас мар тесе килтисем тем те хăтланса пăхрĕç, анчах ним усси те пулмарĕ — эпĕ пурпĕрех шкула çӳреме пуçларăм. Кун пирки маншăн уйрăмах суккăр асатте тăрăшрĕ. Паххум старик хастар та чĕрĕ, тавçăруллă та нумай пĕлекен хресченччĕ. Ун ывăлĕ вара, усрава илнĕ Якур-Энтри Пахомов аттем, ĕçлеме юрататть пулин те, мана темле пусăрăнчăк, тĕттĕм, çаврăнăçусăр, сӳрĕк çын пек туйăнатчĕ, вăл пачах та ашшĕ пек марччĕ.

## АЧА ЧУХНЕХИ САМАНТСЕМ

Пĕчĕк чухнехи самантсем аса килеççĕ.

Çу вăхăчĕ. Хĕвеллĕ çутă кун. Мĕнпур япала çуталса тăрать. Ĕшнере аслисем ретĕн-ретĕн утă çулаççĕ. Эпĕ вĕсем хыççăн утатăп, çĕр çырли пухатăп. Çулакансен йышĕнче Якур-Энтри Пахомов хăйĕн иккĕмĕш арăмĕпе, çамрăкскерпе, юнашар курăнать. Ку вăл вĕсен туйĕ хыççăнах пулнă-тăр тесе шутлатăп.

Эпĕ хамăр утара çӳреттĕм. Вăл килтен икĕ çухрăма яхăнтаччĕ. Утарта вун икĕ-вун пилĕк вĕллеччĕ. Унта пĕччен те, асаттепе кайма та юрататтăм. Вăл удел вăрманĕнче вĕлле çывăхĕнче ларма хапăллатчĕ, çăпата тăватчĕ. Эпĕ вара выляса çӳреттĕм, ăна шыв пырапыра параттăм, мĕн хушнине тăваттăм.

Çав кун, утартан таврăннă чух, эпĕ такамăн тимĕр ункăллă чĕлпĕрне тупрăм. Ăçта хурас ку япалана? Ăна хамран туртса илесрен хăратăп. Ман пилĕкĕмре пиçиххирен çакнă çĕçĕ пурччĕ. Эпĕ чĕлпĕре касса вакла-

ма, чĕнне пытарма, ункисене хама валли илме шут тытрăм. Вĕсене киле илсе килтĕм те асаттене патăм.

Утара уйрăмах пыл юхтарнă вăхăтра кайма юраттăм, ун чухне мана та пай лекетчĕ. Пирĕн утарта никам та пурăнмастчĕ. Унта, ытти пуянрах çынсенни пек, пўрт таврашĕ те çукчĕ. Çапах пыл хурчĕсене те, пылне те никам та тивместчĕ.

Шкула кайиччен çут çанталăк питĕ тĕлĕнтеретчĕ. Эпĕ уйрăмах вăрмана юрататтăм. Кушкă патĕнчи çĕр хăлаçа яхăн çўллĕш ту çине хăпарса тавралăха сăнама кăмăллаттăм. Кайран та тăван ялăма каймассерен çав ту çинчен курăнакан çĕре-шыва пăхса савăнаттăм.

## ТĔРЛĔ ĔÇСЕМ

Пахомовсен кил-йышĕ ĕçченччĕ, ĕçкĕ-çике юратмастчĕ. Мана тем тума та вĕрентетчĕç. Арçын ачасемпе час-часах каçсерен лаша çитерме çўреттĕмĕр. Аслисемпе пĕрле çулла тата кĕркунне Теччĕ хулине ларса каяттăм, унта хăярпа çĕр улми сутаттăмăр. Лашапа ана сўрелеттĕм, утă çулаттăм, лашасене шăвармашыв хĕррине хăваласа каяттăм, ыраш выраттăм. Пысăк мар пулин те, кун каçипе пĕччен ехĕр çĕршер кĕлте вырма хăнăхнăччĕ. 1860 çулхи çулларанпа суха сухалама тытăнтăм. Астăватăп, акапуç силленĕрен каннă вăхăтра апат çинĕ чух аллăмсем чĕтретчĕç. Ку вăл Кушкăра виç-тăват кун сиктермесĕр сухаланă хыççăн пулатчĕ.

## КИРЕМЕТ ХУРАМИСЕМ

Астăватăп, Кушкă çывăхĕнче хăвăлланнă ватă хурамасем ўсетчĕç. Пĕрисем ушкăнĕпех пĕр тĕлтеччĕ, удел вăрманĕ хĕрринчеччĕ. Теприсем вăрманта пĕрерĕн сапаланса ўсетчĕç. Ушкăнăн лараканнисем патне мана сăваплă йывăççем тесе пуççапма илсе çўретчĕç. Чўк тăвакансем хурама енне çавăрăнса тăрса кĕлтă-

ватчӗҫ, Киремет вӗсене усал-тӗселтен сирсе тӑрасса ӗненетчӗҫ, хӑвӑлра пурӑнакан тӗрлӗ ырӑ-хаярсене чӳк тӑватчӗҫ. Ҫак тӗллевпе ҫавӑнта кӗмӗл тата пӑхӑр укҫасем пӑрахатчӗҫ. Темиҫе ҫул хушшинче вӗсем купалансах кайнӑччӗ. Ҫав укҫасене чылайччен никам та тытманччӗ.

Эпӗ вуннӑ-вун иккӗре чухне вӗсене тахӑшӗ вӑрласа кайнӑ. Ҫавӑнтан вара ватӑ хурама патӗнче укҫапа чӳк тума пӑрахрӗҫ.

## ТӲРӖ КӐМӐЛ

Чӑвашсен йӑлинче кӑмӑла каяканни чылай, анчах вӗсене вырӑссенни пек чӑн-чӑн паттӑрла хӑюлӑх, чун хавалӗн ҫӗкленӗвӗ, пултарулӑхӗ ҫитмест. Апла пулин те ырри нумай. Сӑмахран, пӗр-пӗринпе хутшӑнас тӗлӗшре темле хӑйне евӗрлӗ таҫтан тупӑннӑ вашаватлӑх палӑрать. Чӑвашсем калаҫура тӳрккес каласа айӑпа



кӗресрен, кӗҫӗне хурса кӳрентересрен, мăшкăл кӳрессрен асăрханаҫҫӗ.

Чăваш хресченӗсем тӳрӗ кăмăллă пулни тӗлӗнтеретчӗ. Пур япалана та питӗрмесӗр усратчӗҫ, ҫапах вăрласа кайни-туни пачах та ҫук темеллеччӗ.

Ҫемьере пӗчӗк ачасемпе — хӗр ача-и, арҫын ача-и — кунӗпех амăшӗ аппаланатчӗ, анчах вӗсем ӳссе вăй илнӗ май ҫемье пуҫӗ — ашшӗ — арҫын ачасене хăйпе пӗрле илсе тӗрлӗ йывăр ӗҫе хăнăхтаратчӗ.

## ЧĂВАШСЕН ПӲРЧӖ

Эпӗ ача чухне чăвашсен пӳрчӗсенче каҫсерен хăйă ҫутатчӗҫ. Хӗллехи вăхăтра пăру-путек, чăх-чӗп ҫынсемпе пӗрле пӳртрех пурăнатчӗ. Ӗне, лаша, ытти выльăхсем валли ятарлă вите тытатчӗҫ.

## ПУЛĂШУ

Эпӗ пӗчӗк чухне тата ӳссе ҫитӗннӗ вăхăтра чăвашсем хушшинче чухăн ҫын нумайччӗ, анчах вӗсен килӗрен те ялсерен ыйткаласа ҫӳрес йăла ҫукчӗ. Ҫав хушăрах чăвашсем ыйткалакан вырăссене те, тутарсене те кăмăлтанах пулăшатчӗҫ.

## ТИСКЕРЛӖХ

Эпӗ ҫиччӗ-саккăртаччӗ. Удел кантурӗн пуҫлăхӗ хире пăхса ҫӳретчӗ: ура пуҫӗпе купари тислӗке тӗрлӗ еннелле тапса салататчӗ, сухаламан вырăн юлнипе юлманнине тӗрӗслетчӗ. Пӗчӗк ҫӗр лаптăкӗ астумасăр тăрса юлнă пулсан айăплă хресчене: «Вырт тăсăлса! Хулă!» — тесе кăшкăрса пăрахатчӗ.

Хресченӗ ним шарламасăр ҫӗр ҫине выртатчӗ. Ăна хулăпа «кирлӗ чухлӗ» чашлаттаратчӗҫ. Хăш-пӗр чухне пуҫлăхӗ хăех хӗнетчӗ. Малалла тӗрӗслесен ҫӗр ӗҫченӗ каллех айăпа кӗчӗ тӗк, ăна татах ҫаптаратчӗҫ. Пӳртсем хушшине улма-ҫырла йывăҫӗ лартас тӗлӗш-

рен ҫитменлӗх тупӑнсан та ҫаплах тӑватчӗҫ. Пӗр-пӗр ҫын хӑй е тепри хушса тӑнипе хресчене ҫапла тискеррӗн хӗнени ман кӑмӑла ҫав тери хуҫса хӑваратчӗ.

## ЧӐВАШ ЮРРИ

Ача чухне манӑн пурнӑҫра хутран-ситрен савӑнӑҫпа вӑйӑ-кулӑ та пулкалатчӗ. Ҫу уйӑхӗн малтанхи кунӗсенче, ҫур аки пӗтсен, ялсенче, ҫав шутра пирӗн патра та, ҫамрӑксем вӑйӑ картине пухӑнса юрлатчӗҫ, ташлатчӗҫ, вылятчӗҫ. Ку вӑл ялти пӗр е темиҫе тӗлте пӗр вӑхӑтра иртетчӗ. Вырӑссем вӑйӑ картине ытларах кӑнтӑрла тухатчӗҫ, чӑвашсем — каҫхине, кӑнтӑрла — сайра хутра ҫеҫ. Вӑйӑра малтанах иртнӗ ҫул юрланӑ юрӑсене шӑрантараҫҫӗ, хыҫҫӑн — ҫӗнӗ юрӑсем хывса юрлама тытӑнаҫҫӗ (вӗсене, паллах, ҫырса пыман, асра кӑна тытнӑ; чӑвашсем юрӑсене лайӑх асра тытма пултарни кунта питӗ вырӑнлӑччӗ). Юррисенче тӑватӑ, ултӑ, сакӑр е яланхи пек мӑшӑр хисеплӗ сӑвӑ йӗрки, вӗсен пуҫламӑшӗпе вӗҫӗсем састашланаҫҫӗ. Ку вӑл — чӑваш юррин йӑлана кӗнӗ кӳлепи. Ҫӗнӗ юрӑ хывма каччӑсем те, хӗрсем те хутшӑнатчӗҫ, пӗр-пӗрин сассипе килӗштерсе юрлатчӗҫ.

Ялсерен юрӑ ӑстисем пурччӗ, вӗсем ку енӗпе уйрӑмах маттурччӗ. Каярахпа эпӗ чылай юрӑ ҫырса илсеттӗм. Ку юрӑсен кӗвви пурин те пӗр евӗрлӗччӗ, вӑл чунтан тухатчӗ.

Эпӗ хам нихӑҫан та юрламан, сасса уйӑрма та, юрлама та пӗлместӗмччӗ. Ҫапах чӑваш юррисене ҫӗнетсе юрлани ман чунӑма пырса тиветчӗ.

## ЯЛ УЯВӖ

Ҫурхи вӑйӑ карти ҫӗртме уйӑхӗн ҫирӗм пиллӗкмӗшӗ-ҫирӗм улттӑмӗшӗсенче саланатчӗ те, ҫамрӑксем кӗркуннеччен вӑййа тек тухмастчӗҫ. Ун хыҫҫӑн пирӗн ялта чӑвашсен авалхи тӗнӗпе ҫыхӑннӑ икӗ уяв — Уй

чӳкӗ иртетчӗ: ял-йыш ырӑ сывлӑш кӑмӑлне ҫырлахтарма тесе вӑкӑр, тепӗр уявӗнче усал сывлӑш валли ӗне пусатчӗҫ. Ку ӗҫ-пуҫ ҫӗрле ял ҫумӗнчи сӑваплӑ йывӑҫсем патӗнче пулса иртетчӗ. Ҫак уява эпӗ те юратса хутшӑнаттӑм. Уявӗсем ҫӗртме уйӑхӗн пуҫламӑшне е вӗҫне лекетчӗҫ. Ун чухне пӗтӗм ял-йыш — ватти те, вӗтти те — улӑха тапса тухатчӗ. Пуснӑ вӑкӑра е ӗнене ирччenех пӗҫеретчӗҫ. Ялти ватӑсем килнӗ ҫынсене пӗҫернӗ какай валеҫсе паратчӗҫ. Ҫак уява курса савӑнма юнашар ялсенчен те нумайӑн пухӑнатчӗҫ. Хӗрсемпе каччӑсем, ачасем тӗрлӗ вӑййа хутшӑнатчӗҫ: ӑмӑртмалла чупатчӗҫ, пӗр-пӗринпе кӗрешетчӗҫ, вӑй виҫмелле вылятчӗҫ: вӗрлӗкӗн икӗ вӗҫне тӑрса туртӑшатчӗҫ. Вӑкӑра е ӗнене пусса пӗҫернӗ вырӑнта кӑвайт чӗртетчӗҫ.

## ЧУРАППАНТИ АКАТУЙ

Юнашарти Чураппан ялӗнче Акатуй ирттерес йӑлана астӑватӑп. Ун пек уяв ытти чӑваш ялӗсенче те черечӗпе иртетчӗ. Унта ача-пӑчана савӑнмалли нумай-ччӗ. Ҫамрӑксем вӑййӑ картине тӑрса юрлатчӗҫ, лашасемпе ӑмӑртса чупатчӗҫ. Чураппан ялӗнчи хӗрсем хӑнасене тутӑрсем парнелетчӗҫ. Каччӑсем пӗр-пӗринпе кӗрешетчӗҫ, вӑрӑм вӗрлӗкпе туртӑшатчӗҫ. Вӑй-халпа ҫаврӑнӑҫулӑх кӑтартма ытти ӑмӑртусем те ирттеретчӗҫ. Акатуя эпӗ те хутшӑнаттӑм. Шӑв-шавлӑччӗ уявра, хаваслӑччӗ.

## КИШТЕКРИ ВӐЙӐ КАРТИ

Кайран, сакӑрвуннӑмӗш ҫулсенче, Чӗмпӗр кӗпӗрнин Пӑва уесӗнчи Киштек ялӗ патӗнче чӑвашсен вӑййӑ картине ӑнсӑртран курса савӑнтӑм. Ӑна ҫил арманӗ хыҫне пытанса каҫхи вун пӗр сехетрен пуҫласа ирхи виҫӗҫчен пӑхса тӑтӑм. Ун чухне эпӗ ҫуллахи вӑрман витӗр лашапа ларса пыраттӑм.

4-42910



НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
...
РЕСПУБЛИКИ

Çамрăксем икĕ рете (пĕри пысăкрах, тепри пĕчĕкрех) хире-хирĕç тăнă та çирĕп йĕркене пăсмасăр хӳхĕммĕн, хастаррăн юрласа пĕр-пĕрин патне утса пыраççĕ, рет витĕр тухаççĕ те каллех малтанхи вырăна таврăнаççĕ. Унтан татах пĕр-пĕрне хирĕç утаççĕ. Питĕ ăста юрлаççĕ, ташши те чаплă. Çак илеме курсан мана хамăн ачалăхăм аса килчĕ те, куçăмран куççуль тухрĕ. Çавăнпа савăнăçлă вăйă-кулă пĕтессе кĕтмесĕрех киле ларса кайрăм.

Ача чухне илтнĕ чăваш юррисем чылайăшĕ хăйне евĕр. Ташши — яланах илемлĕ ӳкерчĕк. Унта вырăс юррисенче тăтăш тĕл пулакан уйрăм çын пăшăрханăвĕ çук. Чăваш кĕввисем чуна тыткăнлаççĕ. Вĕсем пурте — чăваш поэзийĕн ятарласа хатĕрленмесĕр хывнă тĕслĕхĕсем. Чăваш юррисенче тирпейсĕрлĕх, сĕмсĕрлĕх, намăс-симĕслĕх пачах çук. Кунта вараланман таса кăмăл лайăх палăрать.

## ЧИКАН МАЙРИ СĂМАХĔ

Пĕррехинче пирĕн ял çывăхне, юхан шыв леш енне, чикансен тапăрĕ килсе чарăннăччĕ. Пахомовсен килйышĕпе тата пĕр вырăспа пĕрле эпĕ çавăнта кайнăччĕ. Кĕпер патĕнче ватă чикан майри алла тытрĕ те ывăç тупанне пăхкаласа: «Большой будешь человек. Далеко пойдешь...» — терĕ. Ку сăмахсене мана тӳрех чăвашла куçарса пачĕç. Çакна пурте эпĕ тек ялта юлмăп тесе ăнланчĕç.

Кайран, эпĕ çитĕнсе çын шутне кĕрсен, Пахомовсем ватă чикан майри каланă çак сăмахсене тăтăш аса илетчĕç.

# Пăрантăкра



2*

## ШКУЛА ЛЕҪРЁҪ

Кӗҫех тӑван ялти ирӗк пурнӑҫ вӗҫленчӗ. 1856 ҫулта мана Пӑрӑнтӑк ялӗнчи удел шкулне леҫрӗҫ. Ку вӑл авӑн уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче пулчӗ. Астӑватӑп, вӑл ҫулхине юр ирех ӳкнӗччӗ. Шкула хирте ӗҫленӗ ҫӗртенех, вунпӳччӗ* пулас, илсе кайрӗ. Пӑрӑнтӑка мана усрава илнӗ аттем Якур-Энтри Пахомов леҫрӗ. Малтанлӑха эпӗ унӑн тӑванӗсем — удел хресчен чӑвашӗсем — патӗнче пурӑнтӑм. Шкула вӗренме кӗме нимӗн те хатӗрленменччӗ.

## ПӐРӐНТӐК ЯЛӖ

Пӑрӑнтӑк ялӗ Сӗве хӗрринче ларать. Эпӗ ача чухне унта ик ҫӗр киле яхӑнччӗ. Ялӑн икӗ вӗҫчӗ: пӗринче вырӑссем, тепринче чӑвашсем пурӑнатчӗҫ. Пӗчӗк чиркӳ пурччӗ. Ӳссе ҫитсен эпӗ Пӑрӑнтӑка, Кушкӑ ялне — тӑван кӗтесе — килнӗ чухнехи кӑмӑлпа мар пулин те, хаваспах кӗреттӗм. Кушкӑран куҫҫульпе уйрӑлаттӑм, Пӑрӑнтӑкран — тунсӑхпа. Маншӑн кунта Сӗве шывӗ чуна ҫывӑхчӗ: унта эпӗ ракпа пулӑ тытма ҫӳренӗ, леш енчи хӑвалӑхра уҫӑлса хавасланнӑ.

Эпӗ ача чухне ку ял ҫумӗнче вӑрман ҫукчӗ. Сӗвен тепӗр ҫыранӗнче тӗм-тӗм йывӑҫчӗ, вӑл урӑх ялӑнччӗ, пӗр-пӗрин патне юхан шыв урлӑ тунӑ пысӑк арман пӗви тӑрӑх каҫса ҫӳретчӗҫ. Леш енче тусем ҫӗкленсе каятчӗҫ, унта чӑвашсем Акатуй ӑмӑртӑвӗсене ирттеретчӗҫ, вырӑссем Троица уявлама тухатчӗҫ.

---

* Вунпӳ — десятский, вунӑ килтен суйласа лартнӑ хресчен, ялти йӗркелӗхе сӑнаса тӑраканӑн пулӑшаканӗ.

Пӑрӑнтӑк малтан чӑваш ялӗ пулнӑ, кайран кунта вырӑссем куҫса килме тытӑннӑ. Эпӗ пурӑнма пуҫланӑ ҫуртри Мушкеевсен несӗлӗсем те Пӑрӑнтӑка ҫӗр алӑ ҫул каялла куҫса килнӗ.

Вырӑспа чӑваш ҫыннисем пӗр-пӗринпе килӗштерсе пурӑнатчӗҫ. Мушкеевсен кил-йышӗн хуҫи Гаврила чӑвашсене вырӑссенчен ним чухлӗ те уйӑрса пӑхмастчӗ.

Мана усранӑшӑн Пахомовсем вӗсене укҫа тӳлемен, уйӑхсерен пӑтшар ҫӑнӑх та кӗрпе парса тӑратчӗҫ. Унсӑр пуҫне хваттерти ачасен ашшӗ-амӑшӗ хуҫисене мӗнпе те пулин пулӑшатчӗ.

## ИКӖ ХУТ АСАП

Малтанхи ҫулталӑкӑн иккӗмӗш ҫурринче мана вырӑс кил-йышне, Сидор удел хресченӗ патне, вырнаҫтарчӗҫ. Унта эпӗ икӗ уйӑх пек ҫеҫ пурӑнтӑм. Апла пулин те ҫавӑн чухнехи икӗ ӗҫе лайӑх астӑватӑп.

1856 ҫулхи юпа уйӑхӗн вӗҫӗнче эпӗ чечче чирӗпе хытӑ чирлесе ӳкрӗм. Мана килти им-ҫамсемпе эмеллерӗҫ. Кӗҫӗтсе тӑракан чечче тӑррисене сӑтӑркаласа татасран аллӑмсене ҫӗтӗкпе чӗркенине астӑватӑп. Чирпе аптӑранӑ вӑхӑтра мана Сидор хӑй пӗтӗм кил-йышӗпе питӗ шеллесе пӑхатчӗҫ. Эпӗ ултӑ эрнене яхӑн чирлесе выртрӑм. Сывалма тытӑнсан чир иртиччен вӑхӑтлӑха Пахомовсем килсе илсе кайрӗҫ.

Сидорсем патӗнче пурӑннӑ чухне ҫӳллӗ сентре ҫинче выртса тӑраттӑм. Унта кӑмака ҫинчен улӑхмаллаччӗ. Сентрепе кӑмака хушшинче пушӑ вырӑн пурччӗ.

Пӗрре, 1857 ҫулхи пуш уйӑхӗнче ҫӗрле ҫаврӑнса выртнӑ чухне, сентре ҫинчен персе антӑм та пуҫӑма кӑмака ҫумӗнчи лаххан хӗррине хытӑ лектертӗм. Пуҫ шӑмми миме таранах шӑтнӑ та, эпӗ тӑна ҫухатнӑ. Тӑна кӗреймесӗр виҫӗ куна яхӑн выртнӑ. Кӑшт юсансан мана каллех Пахомовсем Кушкӑна илсе кайрӗҫ.

Ҫапла икӗ хут чирленине пула малтанхи ҫул манӑн шкулта сахал вӗренме тиврӗ.

## ПĔР КĔРЕПЕНККЕ ЧЕЧЕК ЧЕЙĔ

Пахомовсем мана Пăрантăкри шкултан хăйсем патне каникула, Раштавра, Мăнкунта илсе каятчĕç, каялла лашапах леçсе яратчĕç. Ун чухне манăн çул çинче кашнинчех ăш пăтранатчĕ. Ку вăл шкула каяс умĕн пиçсе çитмен апат нумай çисе тултарнăран е хĕлле ытла ăшă, пуç çинченех тумлантарнăран килетчĕ-и тен.

Мана Пăрантăк шкулне вĕренме ярсан суккăр старик, Паххум асатте, хăйне ертсе çӳреме хăнăхса çитнĕ çынсăр юлчĕ. Çавăнпа ватăскер Баратынский пупăн кăмăлне çавăрма шутларĕ: ăна кучченеçлĕх тесе Теччĕрен тенкĕ те алă пуспа пĕр кĕрепенкке чечек чейĕ илсе кайрĕ. Çапла вăл мана шкултан хăтарасшăн пулчĕ. Çитменнине эпĕ ахаль те малтанхи çулне чирчĕре (чеччене, пуçа ыраттарнине) пула ăнăçлах вĕренеймерĕм. Баратынский, паллах, кучченеçе илмерĕ, асатте хутне те кĕмерĕ.

## ШКУЛТИ ПУРНĂÇ

Пăрантăкри шкул ачисем харпăр хăй тум-юмĕпе, çăпатапа çӳретчĕç. Манăн атă çукчĕ. 1858 е 1859 çулхине шкул ачисем валли пуçлăхсем килнĕ чухне тăхăнма тесе пĕр пек тумтир çĕлетме хушнине лайăх астăватăп. Укçине килтисен тӳлемеллеччĕ.

Эпĕ виççĕмĕш е тăваттăмĕш çул вĕреннĕ чухне хама лайăх енчен кăтартнăран тата лайăх вĕренекен тесе мана шкулта ачасенчен чи асли туса хучĕç. (Вĕренсе тухакансенчен те эпĕ чи маттурри пултăм.)

Шкул мана мĕне вĕрентрĕ-ха? Эпĕ пĕчĕкренех ăнакăна лайăх астуса юлаттăм, хăвăрт тавçăрса илеттĕм. Çавăнпа шкул мана такăнмасăр пĕр тикĕс вулама хăнăхтарчĕ. Анчах хам вуланине нумайăшне пачах та ăнланмастăмччĕ. Арифметикăпа тăвата тĕрлĕ шутлама лайăх вĕренсе çитрĕм. Шкула тав туса аса илмелли манăн урăх нимĕн те çук.



Вӗреннӗ чухне лайӑхрах ҫитернипе сывлӑхӑм самайланчӗ. Ҫапах та ку пачах шкул кӳнӗ ырлӑх марччӗ. Эпӗ вырӑссем — Мушкеевсем — патӗнче пурӑнаттӑм та, вӗсем мана Пахомовсенчен лайӑхрах усратчӗҫ.

## ШКУЛТИ ЙӖРКЕ

Шкулта куллен икӗ тапхӑр вӗренеттӗмӗр: ирхине сакӑр сехетрен тытӑнса вун иккӗччен тата кӑнтӑрла иртсен иккӗрен пуҫласа тӑваттӑччен. Хамӑрпа хурӑнташлӑ чӑвашсем патӗнче эпӗ икӗ уйӑха яхӑн ҫеҫ пурӑнтӑм, унтан ытла мар. Вырӑсла вӗрентӗр тесе мана вырӑс кил-йышне куҫарчӗҫ (эпӗ унччен чӑвашла кӑна калаҫнӑ). Шкулта ятарлӑ учитель ҫукчӗ. Вырӑнти шкул пуҫлӑхӗ — Алексей Иванович Баратынский пупчӗ. Унччен маларах кӑштах ӑс пухнӑ аслӑрах класри ачасем пуп кӑтартса пынипе пире, нимӗн те пӗлменскерсене, пӗлӳ паратчӗҫ. Кунта ачасен аталанӑвне, урокри тӑрӑшулӑхне, ӳсӗмне кура тӑваттӑран пуҫласа

ултă çул таран вĕрентетчĕç. Вĕренекенсен йышĕнче çурри ытла чăваш пулин те, пур урок та вырăсла иртетчĕ. Ачасем вара шкула çӳреме тытăннă чухне ман пекех пĕр сăмах та вырăсла ăнланмастчĕç, çавăнпа та вĕсене пĕр-пĕр темăна ăша хывма çав тери йывăрччĕ.

Чи кĕçĕн класа сакăр çулта илетчĕç, унта тăххăртисем те лекетчĕç. Материала мĕн таран асра тытса юлма пултарнине кура пĕтĕм ача йышне тăвата ушкăна уйăратчĕç.

Юлхавлансан, ашкăнсан хулăпа çаптаратчĕç. Пĕррехинче Баратынский пуп урока хатĕрленменшĕн мана та лектерчĕ: хулăпа ултă-çичĕ хутчен çапрĕç. Хытах ыратмарĕ пулин те, питĕ аван марччĕ. Ыттисене ытларах та çапатчĕç.

## ХĔР АЧАСЕН УЙРĂМĔ

Шкулта арçын ачасемпе хĕр ачасен пĕрле вĕренмеллеччĕ. Вĕсен уйрăмĕсене коридор уйăрса тăратчĕ. Хĕр ачасен класĕнче вĕренекенсене пĕр хĕрарăм сăнакаласа тăратчĕ пулас. Унта вырăнти хресченсен, уйрăмах вырăссен, хĕрĕсем пĕлӳ пухатчĕç. Вĕсене арçын ачасенчен сахалтарах вĕрентес тесе тимлетчĕç. Вĕренсе пĕтернĕ хыççăн хĕр ачасем тăван килĕсене таврăнатчĕç, каярах вĕсенчен хăшĕ-пĕри çеç акушеркăна тухатчĕ. Хĕр ачасене вĕрентесси çаплах йăлана кĕреймерĕ, шкул историйĕнче ним чухлĕ те паллă йĕр хăвараймарĕ.

## ХУТ ÇĔЛЕНПЕ КАЮРА

Шкулта эпĕ ыттисемпе питех хутшăнмастăмччĕ, пурте пĕрле вылякан вăййăсене явăçмастăмччĕ. Ял хыçĕнче хут çĕлен вĕçтерме юрататтăм. Тата пĕррехинче эпĕ юлташсемпе пĕрле каюрана шăтăкран чавса кăлармa хăтланнине астăватăп. Тем чул тăрăшсан та эпир ăна тытаймарăмăр.

## ШКУЛ ТУЛАШĔНЧЕ

Шкул тулашĕнчи пурнăçăм пирки эпĕ çакна калама тивĕçлĕ: унччен хи пекех хам ӳсĕмри ачасен вăййиполлине хутшăнман пулсан та, кунта манăн йăпанчăкăм тупăнатчĕ.

Мушкеевсен çурчĕ Сĕве хĕрринчехчĕ. Сĕвене эпĕ тăтăшах пулăпа рак тытма çӳреттĕм. Раксем çыртнăран алă пӳрнисем суранланса каятчĕç. Çут çанталăка юрататтăм, çывăхри хăвалăхра уçăлса çӳреме кăмăллаттăм.

Тăван кĕтесĕм — Кушкă ялĕ — çывăх пулни мана çуралнă вырăна тата тăван-пĕлĕшсене час-час çитсе курма май паратчĕ. Ун чухне вара Якур-Энтри Пахомов сайра хутра эпĕ шкулта мĕнле вĕренни çинчен ыйтса пĕлетчĕ. Анчах эпĕ унăн кăмăлне йӳнеçтерме пултараймастăмччĕ е пачах та пĕлместĕмччĕ. Ку вăл чи малтан эпĕ вĕренӳри ĕçсем çинчен çыхăнуллăн ăнлантарса калама пултарайманран килетчĕ. Шкулта эпĕ вырăссен пурнăçне хăнăха пуçланăччĕ, вăл вара чăваш пурнăçĕнчи йăла-йĕркерен чылай уйрăлса таратчĕ. Çавăнпа та тăван мар атте эпĕ каласа панине тăтăшах ăнланса илейместчĕ. Çитменнине, эпĕ вĕренсе пыракан ăнлавсене ахаль хресчен ăша хывайместчĕ. Энтри Пахомова çакă кăмăлсăр хăваратчĕ, вăл вара шалтах аптăраса ӳкетчĕ.

Вĕренекенсене шкулта вырăсла çеç калаçма, кĕлтума хушатчĕç, анчах чăваш ачисене пĕр-пĕринпе тăван чĕлхепе хутшăнма чармастчĕç. Вара эпĕ хамăн тусăмпа, Игнатий Ивановпа, хаваслах мар хыпарсене сӳтсе яваттăм.

## ТУСĂМСЕМ

Шкула эпĕ тăвата çула яхăн çӳрерĕм, унтан 1860 çулхи çĕртме уйăхĕн вĕçĕнче вĕренсе тухрăм. Пĕлӳ пухнă вăхăтра уйрăмах икĕ ачапа туслашрăм: пĕри —

вырăс ачи Никита Иванов — Пăрăнтăкран, тепри — манăн тăван Кушкăран килнĕ чăваш ачи Игнатий, унăн хушамачĕ те Иванов. Каярах мана Игнатий Иванова чăваш шкулĕн учителĕ пулма вĕрентсе кăларма тӳр килчĕ. Никита Ивановĕ вара, пуян кил-йышран тухнăскер, ĕмĕрне ахаль хресчен хальлĕнех пурăнса иртterчĕ.

## ХӲРЕЛЛĔ ÇĂЛТĂР

1857 çулхи юпа уйăхĕнче тӳпере комета çуталса иртнине астăватăп. Вăл мана пăлхатсах янăччĕ. Комети, чăн та, пысăкчĕ, çур тӳпе лаптăкăшнех сарăлнăччĕ, хӳри те вăрăмччĕ. Икĕ эрнене яхăн çуталса тăнăскер, вăл кăнтăр хĕвел анăç еннелле вĕçетчĕ, ăна курма халăх каçсерен йышлăн тухатчĕ. Комета халăха питĕ тĕлĕнтерчĕ, вĕсем ăна курса юлас тесе каçсерен урама тухатчĕç. Çак «хӳреллĕ çăлтăр» маншăн та интереслĕ пулăм пулса тăнă пулин те ун чухне ăстăнăмра нимĕнле шухăш та вăратмарĕ. Чăвашсем ун çинчен мĕн калаçнине те астумастăп. Йĕри-таврара вырăс хресченĕсем нумайччĕ, вĕсем çак комета килни Чĕмпĕрти Феодосий архиерей вилнине пĕлтерет тесе калаçатчĕç.

## МУШКЕЕВСЕН КИЛĔНЧЕ

Мушкеевсен килне эпĕ 1857 çулта пырса кĕтĕм. Унта виçĕ çул пурăнтăм. Кил хуçи Гаврила Иванович Мушкеевчĕ. Вăл ун чух хĕрĕхсенчеччĕ. Унăн пиччĕшĕ те, Трофим Иванович, кунтахчĕ. Гаврилăн Павăл ятлă ĕçкелеме юрататакан ывăлĕ тата икĕ хĕрĕ пурччĕ: пĕри — ман çулсенчи Татьяна (шкулта эпĕ унпа пĕр вăхăтра, анчах урăх уйрăмсенче вĕреннĕ), тепри — манран аслăрахчĕ, ун ятне маннă ĕнтĕ. Мушкеевсен ачисем пурте сентре çинче çывăратчĕç, эпĕ те вĕсемпе пĕрлех выртаттăм.

Гаврила пиччӗшӗ Трофимпа унӑн арӑмӗ Прасковья та (ҫапла чӗнетчӗҫ пулас) мана хисеплетчӗҫ. Час-часах: «Ванюшка, иди! Ванюшка!» — тени илтӗнсе тӑратчӗ. Ку вӑл мана чӗннине пӗлтеретчӗ. Прасковья йӑпатса тимлеме манмастчӗ. Кукӑль е икерчӗ пӗҫеретчӗ-и — ачисене паратчӗ, мана та сӗнмесӗр иртместчӗ.

Арӑмӗсӗр пуҫне Трофим Мушкеевӑн икӗ ывӑлӗпе хӗрӗ пурччӗ. Вӗсемпе пӗрлех икӗ карчӑк пурӑнатчӗҫ. Пӗри — Гаврила Иванович амӑшӗ, ун чухне утмӑл пиллӗкрен иртнӗччӗ, вӑл суранлӑ урисем ыратнипе аптӑратчӗ. Тепри — Мушкеев ашшӗн аппӑшӗ, суккӑр ҫуралнӑскер е пӗчӗклех суккӑрланнӑскерччӗ, вӑл аллӑсенчеччӗ.

Гаврила Иванович Мушкеев сулхӑн сӑн-питлӗччӗ, хӑйне ҫирӗп тытатчӗ, ҫынсенчен те ҫавнах ыйтатчӗ. Унӑн сӑнӗ кулӑпа ҫуталнине сайра курма пулатчӗ, хӑй вара амӑшне чун-чӗререн хисеплетчӗ. Гаврила Мушкеев хутла начар пӗлетчӗ пулин те (сӑмахсене сыпӑкӑн-сыпӑкӑн вулатчӗ, ҫырасса питӗ чӗркелесе ҫыратчӗ), пур енчен те пултаруллӑччӗ. Вӑл ман асӑма ҫав тери ӗҫчен те хастар вырӑс хресченӗ пек кӗрсе юлнӑ. Вӑр-варскерччӗ, ӗҫсӗр ларма юратмастчӗ, унсӑр пачах пурӑнма пултараймастчӗ. Вӑл тума пӗлмен, вӑй ҫитереймен ӗҫ те ҫукчӗ пулӗ. Сӑмахран, малтан унӑн вӗлле хурчӗсем пулман. Вӗсене ӗрчетме шут тытрӗ те хурт-хӑмӑр ӗҫне вӗренчӗ, кӗҫех ытарма ҫук чипер утар туса ҫитерчӗ. Гаврила малтан сӗреке тума пӗлместчӗ. Тӗв тытрӗ те ӑна та часах ҫыхма вӗренчӗ. Тир туллатма пӗлместчӗ — ҫакна та хӑнӑхрӗ. Мушкеевӑн пурлӑхӗ нумайччӗ, ӑна вӑл хӑй вӑй хурса ӗҫленипе — хуҫалӑха ӑнтарнипе, пулӑ тытнипе тата ыттипе те пухнӑччӗ. Суту-илӳпе аппаланмастчӗ, ку ӗҫ унӑн ятне ярать тесе шутлатчӗ, услам тӑвас тесе ӑнтӑлмастчӗ.

Мушкеев мана ачаш кӑмӑлпа атте пек пӑхатчӗ. Нихӑҫан та айӑпламастчӗ. Хавшак сывлӑхлӑскере хӗрхенетчӗ, анчах шав ӗҫе хӑнӑхтарма тӑрӑшатчӗ. Мана вӑл

хулана пĕрре те илсе каймастчĕ, пулла вара хăйпе пĕрле пĕрмай çӳреттĕм, пултарнă таран пулăшаттăм.

Мушкеевсем килти чĕр чунсене юратни те ман асăмра тарăн йĕр хăварчĕ. Вĕсен выльăх-чĕрлĕх: лаша, ĕне, сурăх, сысна, чăх-чĕп нумайччĕ. Кашнине уйрăм-шар картана хупатчĕç. Хуçисем вĕсемпе тискер хăтланнине эпĕ нихăçан та курман, пачах урăхла — лайăхрах пăхма тăрăшатчĕç: хĕнеместчĕç, кирлĕ-кирлĕ маршăн çапмастчĕç, тертлентерместчĕç.

## ЫРĂ ТĔСЛĔХ

Мушкеев хăй ялан ырă тĕслĕх кăтартатчĕ, çапла вара ыттисене те алă усса ларма памастчĕ, ĕçлеме хистетчĕ. Вăл вăтам пӳллĕ, сарлака хулпуççиллĕ, вăйлăччĕ, сывлăх тапса тăракан сăн-питлĕччĕ. Уншăн ал çемми ĕç ыттисемшĕн час-часах питĕ йывăр е пачах вăй çитереймискерччĕ. Пĕр вăхăтра ун патĕнче пĕр чăваш тара кĕрĕшсе ĕçленине астăватăп. Хуçи çирĕп ыйтнăран малтан ăна Мушкеев патĕнче йывăрччĕ. Кайран хăнăхса çитрĕ.

Кил хуçи шăллĕпе туслă пурăнатчĕ пулин те ăна та ĕçлеме хистетчĕ. Гаврил Ивановичăн хăй пек талайлă тусĕ пурччĕ: вăл кăмăлĕпе те, вăй-халĕ тĕлĕшĕнчен те Мушкеев пекехчĕ. Уявсерен пĕр-пĕринпе тĕл пулатчĕç те калаçса тăранаймастчĕç, хăйсен ĕçĕ-хĕлĕ, шухăш-кăмăлĕ çинчен сăмах ваклатчĕç. Тĕрĕссипе, кил хуçи сахал пуплетчĕ, анчах нумай ĕçлетчĕ. Килте вăл никама та кӳрентерместчĕ, çапах унран пурте шиклентчĕç, çав вăхăтрах хисеплетчĕç. Эпĕ ăна пĕр хутчен кăна ӳсĕр курнă. Ун чухне сăнĕ питĕ тискерччĕ. Кăна курсан пурте кам ăçта май килнĕ унта тарса пытанса пĕтрĕç. Гаврила пичче мана юрататчĕ, нихăçан та хĕнеместчĕ, айăпламастчĕ. Арăмĕ те ăша кăмăллă хĕрарăмччĕ*.

---

* Мушкеев килĕнчен шкул пĕтернĕ хыççăн тухса кайрăм.



Гаврила Ивановичпа эпĕ каçсерен бударка текен пĕчĕк кимĕпе пулла çӳреме юрататтăм. Пулла ятарлă хатĕрпе хăрататтăмăр, ăна икĕ хăлаç тăршшĕ хулă вĕçне тимĕр стакан (чашăк) çакса тунăччĕ. Çав стаканпа шыв питне çапаттăмăр та кӳлĕри пĕтĕм пулла шуйхататтăмăр.

Гаврила Мушкеевăн Кушкăран инçе мар удел вăрманĕнче утар пурччĕ. Кил хуçипе пĕрле унта çӳренине астумастăп, анчах ывăлĕпе, Павăлпа, пĕрле кайкалаттăм, вăл манран ултă çула яхăн аслăччĕ.

Мушкеев халăх ĕçĕнчен те пăрăнмастчĕ. Пурнăç тыткăчи уншăн ĕçчĕ. Вăл этемĕн ĕççĕр пурăнма юрамасть, çĕр çинче кашниех хăй телейне ĕçре шырама тивĕç тесе шутлатчĕ.

Гаврила Мушкеев халĕ куçăм умне пĕр-пĕр вырăс пăхаттирĕ пек тухса тăрать, ырă чун хаваллă улăп пек туйăнать. Кĕскен каласан вăл мана пур енчен те пултаруллă вырăс çынни пек курăнать.

## «ЧĂВАШ ЧĔППИ»

Мана ку килте пĕр карчăкĕ çеç (Мушкеевăн инкĕшĕ), суккăрскер, юратсах каймастчĕ. Вăл мана йĕкĕлтесе, йĕрĕнсе «чувашонок» тетчĕ. Ялан çапла сиввĕн хăтланатчĕ, унран шикленеттĕм. Тепĕр тесен вăл мана усал туман. Эпĕ ăна та ырăпа аса илетĕп. Тепĕр чухне çак суккăр карчăк кĕлете, лаша витине вăрттăн кĕретчĕ те пĕр-пĕр кĕтесре кĕлтăватчĕ.

Пĕррехинче сентре çинче чылай вăхăт çывăрса каяймасăр выртрăм. Çур çĕр çитнĕччĕ ĕнтĕ, пурте çывăраççĕ. Тулта, тӳпере, тулли уйăх çутатать. Пӳртре хăйă çутман пулин те уйăх çутипе кашнинех курма пулать. Эпĕ Гаврила Иванович амăшĕпе суккăр карчăк турăшсем умĕнче чĕркуçленсе кĕлтунине, пуççапнине сăнаса выртатăп. Манăн та вĕсем пек тăвас килет.

Сентре çинчен шăппăн антăм та вĕсен хыçне пырса тăрса пуççапма пуçларăм. Суккăр карчăк мана сисрĕ пулас: «Эс каллех çитрĕн-и, чăваш чĕппи!» — тесе хăваласа ячĕ. Мушкеев амăшĕ хальхинче те мана тивмерĕ.

## ТАВ СĂМАХĔ

Эпĕ çакна калама тивĕç: Мушкеевсен кил-йышĕ мана ырă витĕм кӳчĕ, вырăссен тĕнĕпе пурăнма вĕрентрĕ. Çемйи ĕçченччĕ, ырă кăмăллăччĕ. Мана пурте питĕ юратнăран Гаврила Мушкеев хĕрĕ кĕвĕçетчĕ, хваттерте пурăнакана хăйĕнчен ытларах юратаççĕ тесе шутлатчĕ.

Ача чухне пулăшнăшăн тав туса эпĕ кайран нумай çул хушши Мушкеевсен кил-йышĕпе çыхăну тытса тăтăм. Пăрăнтăка каймассерен вĕсем валли яланах тĕрлĕрен парне — тутăр таврашĕ е тата мĕн те пулин илсе каяттăм. Эпĕ вĕсемшĕн нумаях ырă тăваймарăм тесе шутлатăп. Гаврила Мушкеев мăнукĕсем кайран ман патăмра — Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренчĕç.

## ТУРРА ЁНЕНМЕ ПУҪЛАРӐМ

Шкулта Баратынский пуп манӑн тӗне ёненес кӑмӑла ним чухлӗ те витӗм кӳмерӗ. Вӑл Турӑ саккунӗнче мӗн ҫырни ҫинчен каласа памастчӗ. Аслӑ класра вӗренекен кӗҫӗн ҫулхисене вӗрентсе пынине кӑна пӑхатчӗ, урока пӗтӗмӗшле сӑнаса ҫеҫ тӑратчӗ. Ҫапах та эпӗ ку йывӑрлӑхра хама хытӑ пулӑшакан ҫынна тӗл пултӑм. Вӑл манпа пӗрле 1858—1859 ҫулсенче вӗреннӗ Николай Михайлов чӑваш пулчӗ. Ун чухне эпӗ шкулта иккӗмӗш е виҫҫӗмӗш ҫул вӗренеттӗм. Михайлов Турӑ саккунӗнче ҫырнине калав евӗрлӗ чӑвашла каласа паратчӗ. Мана уйрӑмах Хӑрушӑ суд пуласси ҫинчен ӑнлантарни тӗлӗнтеретчӗ.

Юлташ каласа пани мана питӗ пӑлхантарса янӑран эпӗ ҫӗрле тӗлӗк куртӑм. Пӑрӑнтӑкри чиркӳ тӑрринче тӑратӑп пек. Пурте Хӑрушӑ суда пухӑнаҫҫӗ, Христос килессе кӗтеҫҫӗ. Анчах Вӑл курӑнмасть пек. Ҫак тӗлте вӑранса кайрӑм. Тӗлӗкӗм хӑратса пӑрахрӗ. Ун чухне эпӗ Туррӑн Хӑрушӑ сучӗ пуличчен пурӑнассӑн туйӑнатчӗ.

Аслӑ ҫулсенчи тискер Семен Рубцов хыҫҫӑн Михайлов вӗренекенсен йышӗнче асли пулчӗ. Ун вӑхӑтӗнче кӗҫӗн ҫулхи вӗренекенсене асап кӳресси пӗтрӗ вара. Хӑй айван ӑслӑ пулнӑран Кивӗ Халалра калакан халапсене Михайлов айванлатса яратчӗ, ҫакӑ вара итлекенсен тимлӗхне вӑйлататчӗ.

Ку вӑхӑталла эпӗ кӑшт-кашт вулама хӑнӑхнӑччӗ ёнтӗ. Мушкеевсен килӗнче «Чтение из четырех Евангелистов» кӗнеке пурччӗ. Унта Евангелисенчи уйрӑм вырӑнсене кӗртнӗччӗ, кӗнекене вырӑсла ҫырнӑччӗ. Шкулта авалхи славян чӗлхине вӗрентетчӗҫ. Эпӗ ӑна та пӗлкелеттӗм аран-аран. (Вӗренекенсене кӗлӗ вӑхӑтӗнче чиркӳре авалхи славянла вулама хушатчӗҫ.) Ҫав кӗнекене вуланӑ чухне кӗлӗ, юратупа ырӑ кӑмӑл ҫинчен калакан вырӑнсем манӑн чуна ытларах хускататчӗҫ.

Мушкеевсен кил-йышӗнче хӑнӑхнӑ йӑлана кура тата Михайлов калса панисен витӗмӗпе эпӗ 1864—1865 ҫулсенче) Сызраньте удел ҫӗр виҫевҫинче ӗҫленӗ чухне Турра хытах ӗненме пуҫларӑм. Чиркӗве ирхи кӗлле ҫӳреме тытӑнтӑм, ыйткалакансене вӑрттӑн пулӑшаттӑм. Эпӗ Турра ӳлӗм паттӑр ӗҫ тумашкӑн вӑй-халпа тӗрек патӑр тесе чунтан кӗлтӑваттӑм. Ҫакна эпӗ хама хам ӑнланмасӑрах туса пыраттӑм.

## «ШӐРЧӐКПА КӐТКӐ»

Пӑрантӑкран вӗренсе тӑхнӑ тӗле эпӗ вырӑсла лайӑх вӗренсе ҫитейменччӗ-ха, ахаль чухнехи пек ансаттӑн калаҫма кӑна пултараттӑм. Вырӑсла кӗнекесене ирӗккӗн вулама эпӗ кайран, 1864 ҫулта тин, тытӑнтӑм. Ҫапах шкултан вӗренсе тухнӑ чухне мана Иван Крыловӑн «Шӑрчӑкпа Кӑткӑ» юптарӑвне пӑхмасӑр калаттарчӗҫ. Юптарура мӗн ҫырни маншӑн ним те ӑнланмалла марччӗ.

# Чĕмпĕрти шкул



## ÇӲЛЕЛЛЕ ХӐПАРМА ПУЛӐШАКАН КАРТЛАШКА

Чи лайӑх вӗренекен тесе мана Пӑрӑнтӑкри удел шкулӗнчен Чӗмпӗрти çӗр виçевçисен удел шкулне вӗренме илчӗç. Кӗпӗрне хулине эпир аллӑн кайрӑмӑр. Унта Хусантан, Саратовран, Самарӑран, Улатӑртан, Сызраньтен те пычӗç, çапла вара эпир çӗр алӑ çынна яхӑн пухӑнтӑмӑр (ку шута унччен вӗренме килнисем те кӗреççӗ).

Эпӗ кунта пӗлӳ пухнӑ вӑхӑтра Чӗмпӗрти удел кантурӗнче крепостла йӗркеччӗ. Кантур управляющийӗпе Арсений Федорович Белокрысенкӑпа ытти пуçлӑхсем кӗçӗнреххисене мӗскӗне хуратчӗç, хӑйсене вӗсемпе тӳрккес тыткалатчӗç.

Апла пулин те эпӗ çӗр виçевçисен шкулне яланах ырӑпа асӑнатӑп. Мушкеевсен килӗнче çитӗнсе çитнине, хавшак сывлӑхӑма тата вӑй-халӑма кура килти тата хирти ӗçсене тума хӑнӑхтарнӑччӗ, майӗпен ӗçе те кӳлнӗччӗ. Ун хыççӑн Чӗмпӗрти çӗр виçевçисен шкулӗ маншӑн çӳлелле хӑпарма пулӑшакан тепӗр картлашка пулса тӑчӗ. Кунта эпӗ виçӗ çул вӗрентӗм. Çак тапхӑрта ялан тӑрмашма тиветчӗ, пӗр канӑç та кураймарӑм. Белокрысенкӑпа ытти пуçлӑхсем пире çӗр виçевçин ӗçне хӑнӑхса пыма куллен пӗтӗм вӑя хурса пӗр чарӑнми вӗренме хистерӗç. Шкулта çирӗпленнӗ йӗркепе кунта ал усса ларма памастчӗç, ӗçлесси çирӗп йӑлана кӗнӗччӗ. Кайран эпӗ хам та çакна тӗслӗх вырӑнне хума тытӑнтӑм. Пуçлӑха ларсан та ыттисенчен ӗçе тӳрӗ кӑмӑлпа туса пыма ыйтаттӑм. Сӑмах май,

вĕсене пăсса ярас мар тесе нихăçан та пĕрле ларса картла выляман. Эпĕ çынна ялан унăн тăрăшулăхне кура хаклаттăм.

## УРАРИ СУРАН

1861 çулхине Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Сăр вăрманĕнче ĕçлерĕм. Пыратăп хайхи вăрманпа урапа çинче ларса. Лашам темрен хăраса ĕрĕхсе кайрĕ те, манăн урапа ӳпне çаврăнса ӳкрĕ. Эпĕ хам та тухса ывтăнтăм, сулахай урана икĕ тĕлтен мăкăлтарăм. Ун чухне уесра врач çукчĕ. Вулăс старшини, Богданов чăваш, урана йĕркеллех лартса ярайманĕ, кайран Пăва уесĕнчи Турханта пурăнакан чăваш хĕрарăмĕ те лайăх вырнаçтараймарĕ. Тӳрлетсе лартайман урапа икĕ эрнене яхăн асапланса выртрăм. Суран япăх çанталăкра халĕ те ыратать, уксахлаттарать.

## ШКУЛ ПУÇЛĂХĔ

Чĕмпĕр, Самара тата Хусан кĕпĕрнисенчи удел çĕрĕсене çĕр виçевçисен шкулĕн пуçлăхĕ Михаил Герасимович Иванов пăхса тăратчĕ, ăна кунта ĕçлеме Питĕртен, удел департаментĕнчен, янăччĕ. Вăл питĕ ăслă, сăпайлă çынччĕ, чылай енчен Белокрысенкăран уйрăлса тăратчĕ, кăмăлĕ уçăччĕ. Эпĕ тата ытти чылай ача (пĕтĕмпе вăтăра яхăн), тин кăна Чĕмпĕре пырса çитнĕскерсем, малтанлăха ун хваттерĕнче тата кил хушшинче ятарласа тунă уйрăм сарайра пурăнтăмăр. (1864 çулта пушар тухсан сарай çунса кайрĕ.) Кайран пире Чĕмпĕр хулинчи тĕрлĕ вырăнсене — Котляровский, Фомин, Белоусов çурчĕсене — вырнаçтарчĕç. 1860 çулăн пĕрремĕш çуррине эпĕ Котляровский, хыççăн — Фомин, унтан Белоусов килĕсенче хваттерте пурăнтăм.

Иванов пирĕнпе ырă кăмăллăччĕ, çепĕç калаçатчĕ, удел шкулĕнче вĕренекенсене кичем ан пултăр тесе

тăрăшатчĕ. Удел хресченĕсене те вăл шеллетчĕ, хӳтĕлетчĕ. Çавна пулах ăна Белокрысенко шкул пуçлăхĕнчен хăтарса Пенза кĕпĕрнине пурăнма кăларса ячĕ. Çакăн пирки таврара пурте Михаил Герасимовича тĕрĕс мар айăпланă тесе калаçатчĕç.

## ШКУЛТИ АШКĂНУ

Çĕр виçевçисен шкулĕ кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен ырă тĕслĕхпе палăрса тăмастчĕ. Аслăрах класра вĕренекенсем кунта та, Пăрантăкри пекех, хăйсенчен кĕçĕнрех юлташĕсене асаплантаратчĕç, анчах ку вăл хаяр кăмăлпа мар, ытларах айваннăн та тӳрккессĕн шӳтленипе пулса пыратчĕ.

## ÇĔР ВИÇЕС ĔÇ

Хĕлле эпир каллиграфипе, черченипе, плансем ӳкерессипе тăрмашаттăмăр. 1861—1863 çулсенче çу кунĕсенчен пуçласа хура кĕркуннеччченех пире виçĕ кĕпĕрне тăрăх сапаласа яратчĕç. Нумайăшĕ çĕр виçес ĕçе хĕл каçипе вĕренетчĕ. Пире çителĕклех çитеретчĕç: хăш-пĕр чухне ăшаласа е шаркку хальлĕн сурăх ашĕ паратчĕç, пăтă, кукăль пĕçеретчĕç.

Тĕрлĕ халăх (вырăс, тутар, мăкшă) пурăнакан виçĕ кĕпĕрнери вырăнсене çĕр виçме тухса çӳреттĕмĕр. Çакă мана хама тытма вĕренес, пĕлӳ пухас тĕлĕшрен питĕ пысăк усă кӳрсе тăчĕ: тĕрлĕ халăх йăли-йĕркипе, кăмăл-туйăмĕпе паллаштарчĕ. Çакна асăрхани хамăр чăвашсем пирки шухăшлаттарчĕ, вĕсене ытти халăхсемпе танлаштарса пăхма хистерĕ.

Çĕр виçевçисен удел шкулĕнче вĕренни тата çак профессипе вăй хуни, ĕçпе тĕрлĕ çĕре тухса çӳрени, тĕрлĕ плансем ӳкерни тата ытти те манра астуса юлассине аталантарма май пачĕ. Унччен те ăс-тăнăм начар марччĕ. Халĕ те, чылай çул иртсен, çул çинчи мĕнпур вак-тĕвеке, ял, çын ячĕсене, хушамачĕсене, цифрăсене асра тытасси йăлана кĕрсе юлчĕ.



## ПУЛАС ПАТША

1863 çулта Чĕмпĕре патша еткерçи Николай Александрович килсе кайнине астăватăп. Ун чухне эпĕ ялтаччĕ, хысна ĕçĕнчи çĕр виçевçин вĕренекенĕччĕ. Патша еткерçине курас тесех Чĕмпĕре килтĕм. Унпа пĕрле пысăк свита çӳретчĕ, ун йышĕнче уйрăмах К.П. Победоносцев* ман асра юлчĕ.

Патша еткерçи Чĕмпĕрте виçĕ-тăватă кун пурăнчĕ, балра пулчĕ, хула тăрăх тата хула тулашĕнче курса çӳрерĕ. Кĕçех вăл Чĕмпĕртен Самарăна çула тухрĕ. Пăрахут çине ăсатма хулари паллă çынсем чылайăн пынă тесе каласа паратчĕç. Çитменнине, пăрахут трубинчен тухнă вут хĕмĕсем лекнипе икĕ майран кĕписем çуна пуçланă та, вĕсем пиçсе кайнă имĕш.

---

* Победоносцев Константин Петрович (1827—1907) — истори, юридици наукисенче палăрнă ăсчах, патшалăх деятелĕ. Çĕршыври çут ĕç, наци ыйтăвĕсем патшалăх политикинче пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнччăр тесе уйрăмах тăрăшнă.

## ИККЁЛЕНӲ

Ялта манăн тĕне ĕненекенсен тĕрлĕ ушкăнĕсемпе тĕл пулма тиврĕ, хăш-пĕр чухне питĕ ăслă та чĕрĕ, нумай вуласа пĕлӳ пухнă çынсемпе курса калаçаттăм. Эпĕ юриех вĕсемпе пĕр тĕн тепринчен лайăхрах пулни çинчен калаçу пуçараттăм. Мана харпăр хăй йăлийĕркине тытса пыракансем: «Христос тĕнĕнче чăнлăх çук, кивĕлле ĕненмесен çынна вилĕм кĕтет», — тесе тата урăхла та каласа ĕнентерме тăрăшатчĕç. Эпĕ яланах тĕн-тĕшмĕш пирки шутлаттăм. Çĕр виçевçисен шкулĕнчен вĕренсе тухнă чухне манăн та Турра ĕненесси пурччĕ, анчах эпĕ иккĕленеттĕм, çухалса каяттăм.

## ЮМĂÇ ВĔРЕНТĔВĔ

Хусан кĕпĕрнинчи Берляково вырăс ялĕнчи армансă юмăçран (вăл вырăсчĕ, православи тĕнне ĕненетчĕ) эпĕ юн тухнине вĕрсе-сурса чарса лартма вĕрентĕм. Çакна юри сăнаса пăхаттăм, манăн хамăн юн тухнине те, ыттисенне те çапла мелпе чарса лартма май килетчĕ. Унранах эпĕ çăвара сиенлетмесĕр кантăк хыпма, ăна шăлпа катса çиме вĕреннĕччĕ. Астумастăп, ванчăкĕсене те çăтса янă, те сурса пăрахнă. Эпĕ çакнашкал хăтланни ыттисене тĕлĕнтеретчĕ, мана вара мăнкăмăллăха ӳстерме май паратчĕ.

## ЧĂВАШСЕН МĔНШĔН ÇЫРУЛĂХ ÇУК?

1864 çулта эпĕ Чĕмпĕр кĕпĕрнин Сызрань уесĕнчи Винновка ялĕнче ĕçлеттĕм. Вăл Самарăран Атăл тăрăх хĕрĕх çухрăм анатарахчĕ. Ман пуçăмра унчченех пĕр уçăмсăр шухăш явăнатчĕ: «Ытти халăхсен çырулăх пур-çке, анчах мĕншĕн-ха вăл ман тăван халăхăн — чăвашсен — çук?» — теттĕм. Шăпах Винновкăра çак шухăша чĕртсе яракан ĕç пулса иртрĕ.

Утă уйăхĕнче эпĕ сивĕ чирпе йывăр чирлесе ӳкрĕм. Ун чухне тусем хушшинче пурăнаттăм, манăн хваттер Атăла юхса кĕрекен юхан шыв хĕрринчехчĕ. Юхан шывĕ йӳçсе тăратчĕ. Чирлесси çавăнтан пуçланчĕ. Мана чир муталаса халтан ячĕ. Таврара врач мар, фельдшер та çукчĕ.

Сасартăк Винновкăна Долгорукова княгиня именине тытса тăракан Косинский Осип Львович килсе çитрĕ. Унччен эпир пĕр-пĕрне пĕлмен пулсан та, вăл мана курма пычĕ. Винновкăра çĕр виçевçи пурри çинчен ăна такам каланă пулас. Ун чухне ăна та çĕр виçевçи кирлĕ пулнă иккен. Анчах вăл эпĕ чирлесе ӳкни çинчен нимĕн те пĕлмен. Ман патăма пырсан эпĕ мĕнле çĕрте выртнине курчĕ те: «Кунта юлсан эсир нихăçан та сывалаймастăр, атьăр халех ман усадьбăна ту çине каяр», — терĕ. Ун имениййĕ Самара кукринчи çӳл ту çинчеччĕ. Эпĕ çак сĕнӳпе килĕшес терĕм. Çак вăхăтра маншăн сывалмалли урăх мел çукчĕ. Çитменнине, Косинский çине тăрса сĕнчĕ.

Имение çитсен хуçа хăй пӳлĕмне чĕнчĕ. Унпа пĕрле арăмĕ, кăмăллă ватă поляк майри, пурăнатчĕ. Косинскин ачасем те пулнă, ун чухне вĕсем килте çукчĕ, аслă шкула вĕренме кайнăччĕ. Вĕсен килĕнче полякла тата вырăсла калаçатчĕç.

Кунта икĕ эрне ытла выртрăм, хам чирлесе ӳкни çинчен кирлĕ çĕре çырса пĕлтертĕм. Ун чухне эпĕ хутла лайăхах пĕлместĕмччĕ, шухăшсене хут çине тĕрĕс çырса кăтартма йывăрччĕ-ха. Кĕçех Винновкăна ман вырăна хамăн юлташа Соболева ячĕç. Вăл Косинскисен çак вырăнтан инçех те мар вырнаçнă Аскулă текен именине мана ятарласа пырса курчĕ.

Утă çулма тухнă çĕре эпĕ самайлантăм. Осип Львович патĕнче пурăнни чăвашсене çырулăх туса памаллах текен шухăшăма тата ытларах çирĕплетрĕ. Эпĕ поляк чĕлхипе çырнă кĕнекесем пуррипе çукки çинчен ыйтса пĕлтĕм. Унччен маншăн вырăс чĕлхи кăна

паллăччĕ. Эпĕ вырăсла тата тутарла çырнă кĕнекесене çеç курнăччĕ. Кунта вара поляксен те, вĕреннĕ ытти халăхсенни пекех, хăйсен чĕлхипе çырнă литература пуррине пĕлтĕм. «Мĕншĕн-ха чăвашсен çавăн пек кĕнекесем çук?» — теттĕм эпĕ. Çапла пулса тухни мана чăвашсене питĕ кӳрентернĕ пек туйăнатчĕ.

## ПĔЛӲ ИЛМЕЛЛЕ!

Косинский çавăн чухне мана хăй именийĕнче ĕç тупса пачĕ. Хама пулăшнăшăн тав тăвас тесе эпĕ килĕшрĕм, ĕçе пурнăçланăшăн çирĕм пилĕк тенкĕ илме тивĕçлĕ пултăм. Çакăн пек пысăк укçа пурнăçăмра пирвайхи хут тытса куртăм.

Именирен эпĕ хысна хушнă ĕçĕме пĕтерме тухса кайрăм (Аскулăран вăл пĕр вун пилĕк-вун сакăр çухрăмраччĕ). Осип Львович мана кĕçех çĕр виçессипе тепĕр ĕç туса пама ыйтрĕ. Тӳрех калам: ĕç пахалăхĕ, ăна хăвăрт тăвас тĕлĕшрен эпĕ вăтам çĕр виçевçиччĕ.

Çĕнĕ хушăва Соболевпа пĕрле пурнăçларăм. Ĕçĕмĕршĕн тӳленĕ чухне ман пая ик çĕр е виç çĕр тенкĕ лекрĕ. Ку вăл, эпĕ ун чухне ăнланнă тăрăх, пысăк мулччĕ ĕнтĕ. Укçине тепĕр хĕлле тин, ĕçне пĕтерсен, илтĕм. Ун хыççăн Косинский мана татах пыма чĕнчĕ. Виçĕ эрнелĕх кану кунĕсене илсе çурла уйăхĕн вĕçĕнче эпĕ унăн именине çул тытрăм, мĕн ыйтнине турăм та каллех укçаллă пултăм. Пурĕ пĕрле тăват çĕр тенке яхăн пухăнчĕ. Çак ĕçсем тата вĕсемпе çыхăннă ĕç укçи мана пурнăçра мĕнле те пулин ӳсĕм тăвас тесен пĕлӳ илмеллине ăнкарса илме пулăшрĕç. Эппин, гимназие е университета вĕренме каймалла, Чĕмпĕре куçмалла, унта гимнази пур, çавăнта вĕренме кĕмелле. Юлташăмсем кун пирки пачах шутламан пуль, анчах мана çак шухăш хистесех тăчĕ.

## КАНĂÇСĂР ШУХĂШСЕМ

1865 çулхине çĕртме уйăхĕнчен пуçласа Чĕмпĕр кĕпĕрнин Сызрань уесĕнчи Паньшинăра (вăл Сызраньтен кăнтăрарах вырнаçнă) Прохор Акимович Акимов çĕр виçевçипе пĕрле ĕçлерĕм. Ик-виç эрне тăрмашрăмăр. Çак вăхăтра мана чăвашсене тăван чĕлхепе вулама тата çырма май туса парасси питĕ канăç памарĕ. «Мĕнле май ан пултăр-ха? Йывăрлăхĕ мĕнре?» — текен ыйтусем аптăратрĕç. Малтанлăха çакна тума пултармалла пекчĕ. Çапах та эпĕ чылай иккĕлентĕм, арпашнă шухăшсене çĕнеймерĕм.

Çĕр виçевçисен шкулĕ пит тарăн пĕлӳ паман, эп хамăн пĕтĕмĕшле пĕлӳ çитменнине туяттăм. Çавăнпа йывăр ыйтусене татса пама хал çитместчĕ. Апла пулин те эпĕ тĕн кĕнекисене чăвашла куçарас пирки сĕмленеттĕм. Каннă вăхăтсенче хамăн шухăшсем çинчен пуçлăхăма, Паньшинăра ĕçсене тĕрĕслесе тăракан Иван Иванович Зенкина, пĕлтертĕм. Вăл манăн ĕмĕтсенчен ним усси те пулас çук тесе ĕнентерме тăрăшрĕ. Уяв каçĕсенче эпир Акимовпа тата Зенкинпа пĕрле пухăнаттăмăр та хамăрăн шухăш-ĕмĕтсем пирки тавлашма тытăнаттăмăр. Прохор Акимович çак калаçăва питех хутшăнмастчĕ.

Паньшинăра пураннă вăхăтра чунăма çакăн пек ӳкерчĕк питĕ хускатрĕ. Çынсен инкекĕ-асапĕ çине эпĕ мĕн пĕчĕкренех лăпкăн пăхса тăраймастăмччĕ, вĕсене мĕнле те пулин пулăшма тăрăшаттăм. Паньшино ялне кăкăр умне темиçе Георгий хĕресĕ çакнă ватă вырăс салтакĕ килсе кĕчĕ. Урисем пĕр-пĕринчен аран-аран иртетчĕç, ăна пĕр арçын ача çавăтса пыратчĕ.

Çак инвалида мĕн чухлĕ укçа панине астумастăп, анчах тăван çĕршывшăн юн тăкнă салтакăн пурнăçĕ çапла синкерлĕ килсе тухни тарăхтарсах ячĕ. «Паттăрсене епле-ха хисепрен кăлармалла?» — тесе шутлаттăм тарăхса. Иван Иванович Зенкинпа çакăн пирки

те калаçнă эпир. Эпĕ тăвăнса калаçнине вăл ним те хирĕçлеместчĕ.

1865 çулччен чылай малтан, чăваш халăхне хăй чĕлхипе вулма тата çырма май кӳрес текен шухăш тĕвĕленес умĕн, 1861, 1862 тата малалли çулсенче, эпĕ хама ку ĕçре мĕн-мĕн кирлĕ пулма пултарассине никама шарламасăр та тимлĕн ăша хывса пытăм темелле. Ĕмĕтĕм ун чухне уçăмсăрччĕ.

Çакнашкал тăрăшу манăн кулленхи ĕçре те палăрчĕ. Сăмахран, Сызраньпе Переволоки ялĕнчи уес правленийĕ урлă «Русские ведомости» хаçата çырăнса илес шухăш пуçа пырса кĕчĕ. Çырăнтăм. Кунта эпĕ ялан хаçат вуласа вырăс чĕлхине тимлесех вĕрентĕм, мĕн вуланине лайăх ăнланма тытăнтăм. Косинский килĕнче пурăннă чухне «Петербургские ведомости» либераллă хаçат вулаттăм. Вăл ун чухне хисепреччĕ. Кусене вулама тытăниччен ман аллăма «Бова-Королевич», «Битва русских с кабардинцами» кĕнекесем лекнĕччĕ. Хаçатсем вулама пуçласан кунашкал литературăпа кăсăкланма пăрахрăм.

Эпĕ гимназие кĕме хатĕрленнĕ вăхăт ирĕклĕхшĕн çĕкленнĕ кĕрешӳ тапхăрĕпе пĕр килчĕ. Дмитрий Писарев çыхăну тытакан, унта тăтăш çырса тăракан «Русское слово» журналпа интересленме пуçларăм. Анчах вăхăтăм çитменнипе сахал вулаттăм.

## УДЕЛ ШКУЛĔ УМĔНЧИ ПАРĂМ

1865 çул вĕçĕнче эпĕ Сызраньтен Чĕмпĕре удел контурне куçрăм. Унта манăн удел именийĕсене йĕркене кĕртмеллеччĕ, плансем ӳкермеллеччĕ. Саккун тăрăх çĕр виçевçисен халăх (хресчен) шутĕнчен вĕреннĕшĕн удел ведомствинче вунă çултан кая мар ĕçлемелле пулнă.

Çĕр виçевçи пулса ĕçленĕ вăхăтра уйăхсерен эпĕ вунă тенкĕ илеттĕм. Çулла, уйра тăрмашнă чухне, тата виçĕ тенкĕ хушса тӳлетчĕç. Çапла майпа уйăхсерен

вун виçĕ тенкĕ пухăнатчĕ. Çак укçаран манăн хваттершĕн тӳлемеллеччĕ, тумланмаллаччĕ, апат-çимĕç туянмаллаччĕ. Çапах та вăл вăхăтра ялсенче пурнăç йӳнĕччĕ. Хресченсем пире, çĕр виçекенсене, апатне хăйсемех пĕçерсе çитеретчĕç. Перекетлĕ тыткаланипе тата пĕлсе усă курнипе манăн укçа кăштах юлатчĕ те.

## ЭКЗАМЕНСЕМ

Ăнсăртран маншăн илĕртӳллĕ самант сиксе тухрĕ. 1867 çулхи çурла уйăхĕн пуçламăшĕнче эпĕ гимназин пиллĕкмĕш класне вĕренме кĕме экзаменсем тытрăм. Манран хытах ыйтмарĕç. Эпĕ уйрăмах вырăс чĕлхипе тата естествознанипе экзамен начар тытрăм.

Çĕртме уйăхĕн вĕçĕнче телеграмма илтĕм: Косинский мана Самарăна йыхăрать. Тухса вĕçтертĕм. Осип Львовича унта кураймарăм. Мана палламан икĕ çын кĕтсе илчĕç. Вĕсем Гессенский принцăн Самара çывăхĕнчи именийĕн планне тума сĕнчĕç (патша Косинские пысăк услам илсе парнеленĕ-мĕн). Çак ĕçшĕн мана ултă пин тенкĕ тӳлесшĕн. Сĕнĕвĕ питĕ тупăшлăччĕ. Анчах кунпа килĕшсен манăн гимназие пăрахма тивет. Эпĕ нумай иккĕленсе тăмарăм. Кĕтсе илекенсем мана Самара пристанĕнче лайăх хăналарĕç пулин те, килĕшмерĕм.

Гимназие вĕренме кĕме мана ытларах «Симбирские губернские ведомости» хаçат редакторĕ, Чĕмпĕрти статистика комитечĕн секретарĕ Арнольдов пулăшрĕ.

## КАНТУР ПУÇЛĂХĔ ЧĂРМАНТАРАТЬ

Гимназие вĕренме кĕрес ĕмĕтпе эпĕ удел кантурĕн пуçлăхĕ Арсений Федорович Белокрысенко ячĕпе хама ĕçрен хăтарма ыйтса хут çыртăм. Вăл вăхăтра çĕр виçевçисем хысна ĕçĕнчен пăрăнса хăйсем тĕллĕн ĕçleme тăтăшах таратчĕç: улпутсен çĕрĕсене хресченсене

касса панă çĕрте хаклăрах тӳлетчĕç. Çавăнпа Белокрысенко эпĕ те çавнашкал шут тытнă тесе тарăхса кайрĕ, кăшкăрса пăрахрĕ.

Ман ыйтăва тивĕçтермерĕç. Кăмăлăм кăра та çирĕп пулнипе эпĕ хам Белокрысенко патне урăх каймарăм, анчах унпа тан мар кĕрешӳ пуçларăм.

Малтан Питĕре удел департаменчĕн директорĕ патне ыйтса çыртăм. Тивĕçтерейместпĕр тесе пĕлтерчĕç. Вара удел кантурĕн хĕсметĕнчен укçа тӳлесе тухас шухăш çуралчĕ. Çĕр виçевçисен шкулĕнче вĕреннĕ чухнехи тăкака тӳлесе татма шутларăм. Ку вăл çуллен утмăл тенкĕ тӳленипе танлашать. Пуçлăхсем патне çавăн пирки пĕлтерсе çыртăм. Ыйтăва каллех тивĕçтермерĕç. 1866 çулхине Баратынский пуппа тĕл пулсан çакăн çинчен каласа патăм, кун пирки ун патне малтан та çырсаттăм. Баратынский Головинский отставкăри генералпа лайăх хутшăнса пурăнатчĕ. Лешĕ ман пирки Чĕмпĕр кĕпĕрнаттăрĕ Велио барон патне çыру çырчĕ. Çав вăхăтрах Баратынский мана Велио барон патне кайса килме сĕнчĕ. Барон мана кăмăллăн йышăнчĕ, анчах унран ним усси те пулмарĕ. Вăл Арсений Федорович шухăшне çеç пĕлтерчĕ: лешĕ мана ним тусан та яма килĕшмест.

Эпĕ удел тытăмĕнчех ĕçлерĕм-ха. Тата тепĕр хут ыйтса çыртăм — хальхинче император çурчĕн министрĕ Александр Адлерберг граф патне. Унта уделтан укçа тӳлесе тухас ĕмĕтĕме пĕлтертĕм. Хуравĕ час килмерĕ. Эпĕ çапах пуça усмарăм. 1866 çулхи юпа уйăхĕнчен тытăнса Белокрысенко патне ман пирки С.Д. Раевскипе Белокрысенкăн помощникĕ Плотников çине-çинех çырчĕç. Вара удел кантурĕн пуçлăхĕ 1866 çулхи юпа уйăхĕнче мана Чĕмпĕртен аякка ярас тесе Улатăра куçарчĕ. Вăл ун чухне те эпĕ улталаса тухăçлăрах ĕçе куçасшăн тапаланать тесе шухăшланă. Тĕрĕссипе, ку вăхăтра пикенсех гимназие вĕренме кĕме хатĕрленеттĕм: словарьсем туяннăччĕ, ытти çын-

сем пулăшнипе чĕлхесене вĕренеттĕм. Чĕмпĕртен тухса кайма тивни, паллах, тытăннă ĕçĕме сасартăках пăсса хучĕ.

Улатăра çитсен латинпа нимĕç чĕлхисене уесри шкулсен смотрителĕ Иванов пулăшнипе вĕрентĕм. Пушă вăхăтра яланах пĕлĕве хам тĕллĕн ӳстерме тăрăшаттăм.

Улатăрти уес шкулĕ Алексей Андреевич Мукосеев математик çуртĕнчеччĕ. Ăна Чулхулари дворянсен институтĕнчен нигилист тесе кăларса янине пĕлтĕм кайран. Унпа паллашрăм. Мана Алексей Андреевич пĕр тӳлевсĕр алгебра, геометри вĕрентрĕ, ку пысăк пулăшу пулчĕ. Вăл чиркĕве çӳретчĕ-ха, анчах пĕрре те кĕлтумастчĕ. Мана политикăра витĕм кӳме тăрăшмастчĕ, лайăх, ырă кăмăллă çынччĕ. Темиçе çултан эпĕ Тургеневăн «Ашшĕсемпе ывăлĕсем» романне вуласан Мукосеев мана йăлтах Базаров пек туйăна пуçларĕ.



Манпа калаçнă чухне вăл хăш чух ытла хĕрсе каятчĕ, хăй шухăшĕсене палăртса калама юрататчĕ.

Улатăрта ссылкăри пек пуриннă чух вырăс çĕр виçевçи килĕнче вырăсла ташланине курса тĕлĕнтĕм. Çакă ман асăма лайăх кĕрсе юлчĕ.

Эпĕ Улатăрта 1867 çулхи Çветкеччен пултăм. Кăрлачăн тăваттăмĕшĕ-пиллĕкмĕшĕсенче унта удел учрежденийĕсене тĕрĕслеме Белокрысенко пынăччĕ. Вăл çынсене хытă тытнипе, тӳрккес пуçлăх пулнипе палăрнăччĕ. Хальхинче те мана хăй патне чĕнтерсе темиçе хутчен кăшкăрса илнĕ хыççăн: «Эсĕ нихçан та гимназие вĕренме кĕреймĕн!» — терĕ шанмасăр. Эпĕ йĕрсе ятăм, ыйтса çырнине Питĕрте те тивĕçтермен тесе ăнлантăм та тухса кайрăм.

Тепĕр кунне сасартăк хут çитрĕ, унта мана удел тытăмĕнчен тӳлевсĕр хăтарни çинчен пĕлтернĕ. Маншăн, чухăнскершĕн, пĕчĕк ĕçре тăраканшăн, паллах, министерствăра хута кĕрекен никам та çукчĕ. Уделтан хăтарасси Белокрысенкăран килмерĕ, унăн шухăшне ыйтса тăмарĕç.

Гимназие вĕренме кĕрес тесе Сызраньтен Чĕмпĕре куçни çулталăка яхăн çитрĕ. Уделтан хăтăласшăн тăрмашнине кантур пуçлăхĕ шавах сăлтавсăр пӳлсе пынăран эпĕ ăна чунтан курайми пулнăччĕ. Тепĕр чухне ĕмĕтре тӳпене вĕçсе хăпарнă пек, вара Белокрысенко çине йĕтресем пăрахнă пек туяттăм. Анчах инкек ырра вĕрентет: Арсений Федорович, мăйăмран çакса янă чул пек, мана пит чăрмантарчĕ пулин те, малалла вĕренес кăмăлăма пиçĕхтерчĕ, апла пулсан ырри патне илсе çитерчĕ.

# Гимназире





## ЧӐВАШ ШКУЛӖ ЙӖРКЕЛЕС

Гимназире тӑрӑшса вӗрентӗм, ҫулталӑк иртнӗ тӗлелле эпӗ вӑтам вӗренекенсен йышӗнчеччӗ, анчах вырӑс чӗлхине чылайччен хӑнӑхаймарӑм. Тата эпӗ нимӗҫ чӗлхипе те вӑйсӑрччӗ.

Ҫӗр виҫевҫисен шкулӗнче крепостла йӗркеччӗ. Чӗмпӗр гимназийӗ унран питӗ уйрӑлса тӑратчӗ: кунта пӗтӗмӗшле пӗлӳ паратчӗҫ, ҫынна хисеплесси тӗп вырӑнтаччӗ.

Гимназири ҫакнашкал лару-тӑру мана питӗ кӑмӑла каятчӗ, ыттисене те ҫакӑн пек лайӑх пурӑнтарас килетчӗ. Нумайрах пӗлӳ илме май парса мӗншӗн-ха чӑвашсене те ман пек телейлӗ те тулли кӑмӑллӑ тӑвас мар-ха теттӗм. Вара тӑван халӑха ҫутта кӑларас тата ҫав тӗллевпе ятарлӑ чӑваш шкулӗ йӗркелес шухӑшӑм 1868 ҫулта татӑклӑнах ҫирӗпленсе ҫитрӗ.

## ВИНОГРАДОВ ВӖРЕНТЕКЕН

Пуринчен ытла мана вырӑс чӗлхипе литературине вӗрентнӗ Алексей Иванович Виноградов аса килет. Семинарипе университет пӗтернӗскер, вӑл пире грексен трагедийӗсенче тата вырӑссен чи лайӑх кӗнекисенче мӗн ҫырнине илемлӗ те илӗртӳллӗ каласа паратчӗ. Алексей Иванович уйрӑмах авалхи грексен пӗтӗм пуянлӑхне юратма хавхалантарса пыратчӗ. Вӑл грек культури умӗнче пуҫ таятчӗ, хӑйӗн интереслӗ те чуна тыткӑнлакан урокӗсенче авалхи грексем ӑсхакӑла аталантарма, йӑлана кӗртме хытӑ тӑрӑшни ҫинчен ҫирӗппӗн палӑртса калатчӗ.

Шел пулин те, Виноградовăн вĕрентӳ ĕçĕнче çитменлĕхĕ те пурччĕ: вăл вĕренекенсен пĕлĕвне пур чухне те тĕрĕс хаклаймастчĕ. Сăмахран, мана, чăваша, вырăс чĕлхине вĕренме мĕн тери йывăррине шута илмесĕр эпĕ çырнă сочиненисене класра сӳтсе явнă чухне йĕплесе илетчĕ. Ытларах пĕр темăпа çырнă сочиненисене суйласа илетчĕ те вĕсене темиçе урок хушши вĕренекенсен умĕнче тĕплĕн тишкеретчĕ. Çакна, паллах, ырă шухăшпа тăватчĕ. Ку йĕркен усси те каштах пурччĕ: хамăр çырнине мĕн кĕтнине пĕлсе тăрса эпир тăрăшарах ĕçлеттĕмĕр, сочиненисене пикенсе якататтăмăр. Питĕ тиркенĕрен манăн уйрăмах вăй хума тиветчĕ.

1869 çулта Виноградова Мускаври вĕренӳ округне куçарчĕç. Гимназире юлашки тапхăр ĕçленĕ чухне эпĕ унăн килĕнче икĕ-виçĕ хутчен пулнăччĕ. Алексей Иванович хăй патĕнче пурăнакан пĕр вĕренекене мана математика вĕрентме май туса панăччĕ.

Виноградовăн вĕренекенсене килне чĕнсе илсе вĕсен сочиненийĕсенчи çитменлĕхсене сӳтсе явас ырă йăла та пурччĕ. Каларăм ĕнтĕ, мана чăвашла сăмах çаврăнăшĕсемшĕн хытă леккелетчĕ. Пĕрре мана хăй хваттерне чĕнсен Виноградов туртас килни çинчен асăнчĕ. Ун чухне çумĕнче сигара пулмарĕ. «Хам кайса илсе илем-и?» — терĕм. Вăл мана харпăр хăйне мĕскĕне хума, çын чысне яма кирлĕ марри çинчен хытă вĕрентсе илчĕ. Эпĕ пурпĕрех лавккана кайса килтĕм, унăн укçипе сигара туянтăм. Вĕрентекен çавăн чухне калани питĕ шухăша ячĕ. Гимназие вĕренме кĕнĕ вăхăтра пурнăç çине хресченлех пăхаттăм-ха. Виноградова пулăшнă пек, çынна ырă тăвасси маншăн пĕртте кӳрентерекен, мĕскĕнле ĕç марччĕ. Вĕрентекен мана суя сукмакпа утма хистемерĕ-ши?

## НУМАЙ ВУЛАТТӐМ

Гимназире вӗреннӗ чухне эпӗ вырӑс чӗлхине лайӑхрах тӗшмӗртес тесе, пур чухне те ӑнкарса ҫитмесен те, хаҫат-кӗнеке ялан алла тытаттӑм. Толстойӑн «Вӑрҫӑпа мир» романне пысӑк ҫӗкленӳпе вуласа тухрӑм. Белинские тишкереттӗм. Сӑмах май ҫакна палӑртса хӑварам: унӑн критика статйисене пире, вӗренекенсене, темшӗн вулама чаратчӗҫ. Анчах ку мана Белинские кӑна мар, Писаревпа Добролюбова та вулама чӑрмантармарӗ. Вӗсен кӗнекисене Карамзин библиотекинчен илсе вулама пулатчӗ.

Пушкин ҫырнисенчен мана унӑн прози кӑна килӗшетчӗ. Сӑвӑсене эпӗ питех юратмастӑмччӗ. Поэзи манӑн чуна хускатаймастчӗ. Ҫакӑ эпӗ унӑн илемне туйса илейменрен килнӗ ахӑр. Гончаровӑн «Фрегат «Палладине» те, ытти лайӑх хайлавӗсене те вуласа тухсаттӑм.

Ун чухне вуланисене асилнӗ май ҫакна палӑртасшӑн: вӑл-ку кӗнекене сивлесси критика статйисене ытла та ӑша хывнӑран килнӗ пулмалла. Лермонтовӑн «Демонӗ» мана сӑмах пуххи пек кӑна туйӑнатчӗ, «Мцыри» вара килӗшетчӗ: унта мӗскӗн чун йӗри-таврари тискерлӗхпе кӗрешнине сӑнласа кӑтартнӑ.

## БАРСОВ

Виноградова урӑх ҫӗре куҫарнӑ чухне эпӗ ҫиччӗмӗш класраччӗ. Ун вырӑнне вӑхӑтлӑха тӗн семинарийӗнче вӗрентекен Матвей Васильевич Барсов ӗҫле пуҫларӗ. Вӑл пире вӑрах вӗрентмерӗ, анчах асӑмӑрта хӑй пирки салху кӑмӑл хӑварчӗ: унӑн лекци вулас йӗрки-мелӗ Виноградовӑннипе танлаштарсан пачах урӑхлаччӗ: ӳрӗк-сӳрӗккӗн те типпӗн, хавхаланусӑр вулатчӗ. Матвей Васильевич пире ҫулталанӑка яхӑн вӗрентрӗ. Эпӗ тӳрех ӑна сивлеме тытӑнтӑм. Ку тапхӑрта манӑн пуҫра ҫынсем пурте пӗр пек пултаруллӑ ҫуралаҫҫӗ, вӗсем

тĕрлĕрен пулса каясси пурнăçри лару-тăруран, начар вĕрентекенрен тата ыттинчен те килет текен ĕненӳ çирĕпленнĕччĕ. Çавăнпа уроксем вăхăтĕнче Барсовпа тавлашкалама тытăнтăм. Вăл мана çĕнтеретчĕ, çапах ăна тăрăнас тесе унăн хирĕçӳлĕхĕсене асăрхама тăрăшаттăм.

Вĕренекенсем ман майлăччĕ, учителе никам та юратмастчĕ, эпĕ уроксенче хирĕç тăнине вĕсем ырлатчĕç.

Барсов ман пирки Ауновский инспектора каласа кăтартнă. Лешĕ мана ăна-кăна ăнлантарса пама хăй патне чĕнтерчĕ. Унта йăнăша йышăнма, ухмахла хăтланнă тесе калама çеç тивĕçлĕ пултăм. Гимназирен вĕренсе тухас умĕн кăшт маларах Барсов пире Колумб Америкăна уçни тата çакă çĕр чăмăрĕ çинчи пулăмсене мĕнле витĕм кӳни çинчен класра сочинени çырма хушрĕ. Яланхи пек эпĕ сасăпах хирĕçлеме тытăнтăм: сĕннĕ тема пайĕсем хушшинче шалти çыхăну çук, кирек мĕнле шухăша та кĕскен те уçăмлăн каламалла, ăна тăсса, тĕтрелетсе ямалла мар тесе ĕнентерме пикентĕм. Çак асăрхаттару виçесĕр çивĕч те тӳрккес пулса тухрĕ. Барсов çакăнпа усă курса мана валли серепе хатĕрлерĕ: асăрхаттарусене хут çине çырса пама ыйтрĕ. Эпĕ килĕшрĕм, Барсова критиклесе хут çине çырса патăм. Вăл вара ăна Ауновский инспектор патне çитернĕ.

Инспектор мана хăй патне чĕнтерчĕ те эпĕ тиркешсе çырнине тишкерсе тухрĕ, хута тĕплĕ çырманнине кăтартрĕ. Гимназирен вĕренсе тухасси икĕ-виçĕ уйăх çеç юлнăччĕ, çак тапхăрта шухăшламасăр хăтланни, вăл калашле «çавнашкал ухмахланни», тĕлсĕр пулнине ĕнентерсе пачĕ. Ауновскипе калаçни манăн вĕри кăмăла сивĕтрĕ, лăплантарчĕ. Эпĕ вара Барсовран тăрăхлама пăрахрăм.

## ВИШНЕВСКИЙ

Гимнази директорӗ Иван Васильевич Вишневский мана, вырӑс марскере, чунтан хисеплетчӗ, питӗ тимлетчӗ. Ун ҫинчен лайӑххипе тав тунисӗр пуҫне урӑх ним калама та пӗлместӗп. Гимназирен вӗренсе тухнӑ чухне пӗтӗм класран пӗр эпӗ кӑна ылтӑн медаль илме тивӗҫлӗ пултӑм (уйрӑмах лайӑх вӗренекенсене кӗмӗл медаль пачӗҫ). Ҫав парнене Вишневский витӗмне пула илтӗм пулӗ тесе шутлатӑп. Тепӗр тесен ҫакна та каламалла: гимназире тӳрӗ кӑмӑлпа вӗрентӗм, ҫавӑнпа асӑннӑ медале илме тивӗҫ пулнине нимӗн чухлӗ те ӳстерсе хакламан-тӑр.

Эпӗ экзаменсем тытнӑ ӗнтӗ, медаль парассине те пӗлетӗп, хам хальлӗхе ҫавах гимназире вӗренекен шутланаттӑм. Пӗррехинче яланхи хура шӑлавара мар, тӗрлӗ тӗслӗ — сенкер, хура та кӑвак йӗрлӗ-йӗрлине тӑхӑнтӑм та кӗлӗ вӑхӑтӗнче гимнази чиркӗвне вӗренекенсен речӗ хыҫне пырса тӑтӑм. Вӑл вырӑна яланах ҫиччӗмӗш классем йышӑнатчӗҫ. Манӑн юлташӑм та ҫакнашкал костюмпа ҫитсе тӑчӗ. Вишневский хайхи тӗлсӗр те тӗлӗнтермӗш тума асӑрхарӗ те пире чиркӳ кӗлли хыҫҫӑн класа хупса лартма хушрӗ.

Кӑнтӑр апачӗ хыҫҫӑн кӑштах кансан, тӑвата сехет тӗлнелле, Иван Васильевич хуралҫӑпа пӗрле пычӗ те алӑка уҫма хушрӗ, пире ирӗке кӑларнӑ май: «Астӑвӑр, тек ун пек ан хӑтланӑр!» — терӗ. Ҫак мыскара ун чухне манӑн асамра юлчӗ.

Гимнази директорӗ питӗ Турра ӗненетчӗ, шавах чиркӗве ҫӳретчӗ, вӗренекенсене унта харпӑр хӑйне епле тытмаллине тӗслӗх пек кӑтартатчӗ, кӗлтума кирлине палӑртатчӗ. Хӑй вӗренекенӗсенчен те Турӑ ҫуртне ҫавӑн пек ӑшӑ кӑмӑлпа юратма ыйтатчӗ. Гимнази чиркӗвӗ хыҫҫӑн вӑл уйрӑмах хӗрарӑм мӑнастирӗн чиркӗвне ҫитсе курма кӑмӑллатчӗ.

## ХРИСТОФОРОВ

Историпе географие тĕн семинарийĕпе тĕн академине пĕтернĕ питĕ лайăх преподаватель Иван Яковлевич Христофоров вĕрентетчĕ. Историри пулăмсем, египетсен, финикиецсен тата ытти халăхсен аваллăхĕ çинчен вăл уйрăмах илемлĕн те чĕррĕн каласа кăтартатчĕ.

Курсра палăртнисĕр пуçне класа кĕнекесем илсе пыратчĕ те историпе географи ыйтăвĕсемпе нумай материал вуласа паратчĕ.

## АУНОВСКИЙ

Инспектор ĕçне Владимир Александрович Ауновский туса пыратчĕ. Ун чух хула тата гимнази вĕренекенĕсем хушшинче йĕркесĕрлĕхсем пула-пула иртетчĕç. Владимир Александрович вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе нумай тăрăшрĕ. Вăл тимленипе тата тивĕçлĕ ĕçсем туса иртнернипе вĕренекенсем хăйсене йĕркеллĕ те кăмăллă тытма пуçларĕç. Ачасен вăхăтне усăллă иртерес тесе Ауновский литературăпа музыка каçĕсем, концертсем йĕркелетчĕ. Ашкăннине, йĕркесĕр хăтланнине курсан вăл пире тăрăхласа хытă çунтаратчĕ.

## Ӳ̆КĔТЛЕВ

Чĕмпĕрте гимназире вĕреннĕ чухнехи юлашки тапхăрта эпĕ хамăн чăвашсене çутта кăларас ĕмĕтĕме пурнăçа кĕртме тытăнтăм.

1868 çулта гимназире улттăмĕш класра вĕреннĕ май çуллахи каникул вăхăтĕнче тăван ялта Кушкăра Пахомовсем патĕнче пурăнтăм. Ялта Пăрăнтăк удел шкулĕнче пĕрле вĕреннĕ Игнатий Ивановпа тата Алексей Рекеевпа çывăхрах паллашрăм. Манăн вĕсем шкултан мĕнле пĕлӳ̆пе, уйрăмах вырăс чĕлхипе, епле вĕренсе тухнине питĕ пĕлес килчĕ. Кĕçех çак ачасем



ниме те вӗренейменнине, нимӗн те ăнланайманнине тавçăрса илтӗм. Вара манăн юлташсене темле пулсан та çын шутне кӗртес, тӗрӗсрех каласан, пӗлӳ парас килсе кайрӗ.

Пӗлӳ илесси ун чухне улпута е чиновника тухас текен пăсăк шухăшран уйрăм марччӗ. Çын ăслăрах пулас, анлăрах çул çине тухас тет пулсан вăл ытти-сенчен, хутла пӗлменнисенчен е вӗренсе пӗтерменни-сенчен, ытларах çăмăллăх илме тивӗçлӗрех пекчӗ, çав çын вӗренес тесе халăха хăйне евӗр парăма кӗртет пекчӗ. Эпӗ ӗнтӗ çителӗклӗ пӗлӳ илнӗ, шăпамшăн кă-мăллă çын пек туяттăм хама, çавăнпа юлташăмсене Чӗмпӗре пӗрле вӗренме илӗртсе каяс пулсан вӗсемшӗн явап тытма тивӗçӗм пур тесе шутлаттăм.

Кушкăпа Кивӗ Пăрăнтăк ялӗсен таврашӗнче уçăлса çӳренӗ чухне çакăн çинчен калаçса, ӗнентерсе пӗтӗм çу иртрӗ темелле. Эпӗ юлташăмсене çине тăрсах Чӗм-пӗре пыма ӳкӗтлеттӗм. Мана ун чухне пур ӗçе тума

та ҫӑмӑл пулас пекчӗ. «Пырӑр кӑна, унта вара сирӗншӗн пурте пулӗ. Эпӗ сире вырнаҫтарӑп», — тесе илӗртеттӗм. Ялти тӗттӗм ачасене вӗрентсе кӑларас тесе ӗмӗтленнӗ чухне чӑвашсене те, вырӑссене те асра тытса тӑраттӑм. Пуринчен ытларах чӑвашсене ӗнтӗ, вӗсем ытла та сӗм тӗттӗм, хут пӗлместчӗҫ.

Эпӗ шантарса та ӗнентерсе каланипе Рекеев ҫеҫ килӗшрӗ. Иванов вара, авланнӑ та ача-пӑчалласкер, манӑн сӗнӗве йышӑнмарӗ.

## РЕКЕЕВ

Рекеев ман патӑма Чӗмпӗре ҫуран пырса ҫитрӗ. Эпӗ ӑна Раевский патӗнчи хамӑн хваттере вырнаҫтартӑм. Вӑл аслӑччӗ, темиҫе пысӑк пӳлӗмлӗччӗ. Юлташӑм укҫасӑрах килчӗ, ҫумӗнчи япали те сахалччӗ: ҫири тумтирӗпе сых ятне илнӗ кӗпе-йӗм кӑначчӗ. Ӑна хваттере йышӑнасси пирки эпӗ малтан Раевскипе калаҫса татӑлманччӗ-ха. Астӑватӑп, Рекеев ман патӑма Чӗмпӗре 1868 ҫулхи юпа уйӑхӗн ҫирӗм саккӑрмӗшӗнче ҫитрӗ. Вӑл малтанхи вӑхӑтра шавах сават-сапа ӳкеретчӗ — ку вӑл ӑна тыткалама хӑнӑхманран килетчӗ. Раевский 1868 ҫулхи чӳк уйӑхӗнче Питӗрте сасартӑк вилсе кайрӗ. Эпӗ вара Алексейпе пӗрле ун патӗнчех хваттерте юлтӑм. Тусӑма кӗҫех хам шутран уес шкулне Петухов вӗрентекен патне вырнаҫтартӑм.

Рекеева уес шкулӗн пӗрремӗш класне вӗренме кӗмешкӗн хатӗрлеме тата унта кӗртме май килчӗ. Ӑна экзаменсем тыттарнӑ чухне чылай ырӑ сӑмах каларӗҫ. Ку вӑхӑт тӗлнелле Раевский еткерҫисен хваттерӗнче манпа пӗрле гимназире улттӑмӗш класра вӗренекен Соколовпа Панаев пурӑнатчӗҫ, вӗсем иккӗшӗ те вырӑсчӗ. Эпир пурне те хамӑрах йӳнеҫтерсе тӑраттӑмӑр. Кашкаров килет пуль тесе ятарлӑ пӳлӗм хатӗрленӗччӗ. Рекеев пирӗнпе пӗрле тӳлевсӗрех пурӑнатчӗ, ман шутран апатланатчӗ. Ӑна улпут кил-ҫуртӗнче лампа, сават-сапа тата ытти хатӗр-хӗтӗре асӑрханулла тыткалама

вĕрентес тесе нумай тăрăшрăм. Хваттере пĕр карчăк тирпейлесе тăратчĕ. Вăлах пире валли апат-çимĕç хатĕрлетчĕ.

## ЙЫШ ХУШĂНАТЬ

1868 çулхи раштав тĕлне эпĕ чĕннипе Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Чукалтан Исаев вырăс çитрĕ. Ăна Пăрăнтăкра вĕреннĕ чухнех пĕлеттĕм. Кашкаров тусăма хăй хваттерне вырнаçтарма килĕшрĕ. Исаев та ним укçа-тенкĕсĕр, кирлĕ япаласăр-мĕнсĕр килчĕ. Ун хыççăн эпĕ хам çине тăрса шантарнипех Пăчăрлă Пашьел чăвашĕ Егор Андреевич Улюкин çитрĕ. Ăна та хам шутран усрама килĕшрĕм. Çапла вара Кашкаров хваттерĕнчи пĕр пӳлĕмре улттăн вырнаçрăмăр: эпĕ, Исаев, Рекеев, Улюкин, Панаев тата Соколов.

Манăн Улатăртан илсе килнĕ укçа юлнăччĕ-ха. Левашов килĕнче вĕрентнĕшĕн те кăштах укçа илсе тăраттăм. Кунсăр пуçне кĕпĕрнери земство управинче ĕçлекен Горбунов хушаматлă мордва хресченĕн ачисене вĕрентнĕшĕн тупăш илме май килнĕччĕ. Çав вăхăтрах эпĕ Раевский еткерçисен — унăн аппăшĕн, Кашкаровăн, Алексеевăн ĕçĕсене туса пыраттăм. Çапла майпа Рекеева, Улюкина тата Исаева усрамалăх укçа пухăнса пыратчĕ. Чĕмпĕре ман патăма тата Паснапуç ялĕнчен тепĕр чухăн пĕлĕш, Кашкаровпа пĕр хушаматлăскер (унăн тăванĕ мар паллах), килсе вырнаçрĕ. Каламасăрах паллă: унăн та ман шутăмран пурăнма лекрĕ.

## ЮЛТАШĂМСЕМ ПУЛĂШАТЧĔÇ

Чĕнсе илнисене пурне те, Панаевпа Соколова тата хам вĕрентсе хатĕрленĕскерсене, вĕçе-вĕçĕн Чĕмпĕр уес шкулне вырнаçтарса пытăм. Ĕнтĕ эпир Кашкаров хваттерĕнчи чылаях пысăк икĕ пӳлĕмре пурăнаттăмăр. Çывăх пĕлĕшĕмсем ялтан килнĕ çамрăксене хĕр-

хенетчĕç. Горбунов, сăмахран, чăваш ачисене укçан та пулăшатчĕ, вĕсене кĕнеке, ытти хатĕрсем туянса паратчĕ. Соколовпа Панаев юлташăмсем укçан пулăшма вăй çитерейместчĕç пулин те уроксем тунă чух юнашарччĕ.

## ÇУЛЛА

1869 çулхи çу вăхăчĕ тĕлне Раевский еткерçисем — Кашкаров, Алексеев тата ыттисем — пурлăха пĕр-пĕрин хушшинче пайларĕç те хваттерне хăварчĕç, япалисене илсе Чĕмпĕртен тухса кайрĕç. Эпĕ те Кашкаров хваттерĕнчен тухрăм, çу вăхăтне кăштах Левашов купса патĕнче, кăштах Кушкăра — Пахомовсен килĕнче (хăш чухне Пăрăнтăкра та, Мушкеевсем патĕнче), ирттертĕм. Манăн чăваш ачисем те каникула килĕсене кайса пĕтнĕччĕ.

## УЛЮКИН

Ялшăн тунсăхланăран, хула пурнăçне хăнăхма хал çитерейменрен Улюкин хăйĕн тăван ялне каялла тухса тарчĕ. Унăн кăмăлне сирес тесе тем пек тăрăшрăм, анчах ним усси те пулмарĕ. Кунта ăна ним те килĕшместчĕ. Эпĕ ăна садсене, хула хĕррине кăтартса çӳрени ахалех пулчĕ. Вăрмана илсе çитеретĕн те, вăл: «Мĕн вăрман темелĕх пур кунта? Пирĕн патăмăрти вырăнсене курасчĕ!» — тетчĕ. Улюкин Сăр вăрманĕ хĕрринче çитĕннĕ. Унти вăрман сарлакăш утмăл çухрăма, тăршшĕ — виç çĕре яхăн. Ăна сада илсе каятăн та, кунта пурне те касса-иртсе пĕтернĕ тетчĕ, найкăшатчĕ. Çакна вăл тăррине каснă акацисем пирки калатчĕ. Вара каллех тăван тавралăхри йывăçсемпе танлаштарма пикенетчĕ. Юлашкинчен тунсăхласа çитнипе ман патăмран кайрĕ-кайрех. Пур япалана та питĕ чĕре патне илекен çынччĕ вăл.

Кайран вăл Чĕмпĕртен кайнăшăн питĕ ӳкĕнчĕ. Ма-

нăн ăна тепĕр хутчен чĕнсе илме май килчĕ: вăл кĕске вăхăтлăха таврăнчĕ те хăйĕн юратнă вăрманне, ялне татăклăнах тухса тарчĕ.

Вăл вăхăтра тутарсем пуçĕсене хырса тăратчĕç, чăвашсем вăрăм çӳçпе çӳретчĕç, çапла майпа тутарсем пек пулас мар тесе тăрăшатчĕç. Тăван килне тухса ан кайтăр тесе Егор Улюкин çӳçне питĕ кĕске касса янăччĕ, ялта капла курăнма иментĕ тесеттĕмĕр. Анчах ку та пире пулăшмарĕ: йĕкĕт хулара юлас темерĕ.

Улюкин кайнă хыççăн ман патăмра Рекеев, Исаев тата Кашкаров çеç юлчĕç. Вара пурте пĕрле çĕнĕ хваттере пурăнма куçрăмăр.

## ГЛАЗОВСЕМ ПАТĔНЧЕ

Чĕмпĕр гимназийĕнче вĕреннĕ чухне эпĕ Глазовсен кил-йышĕпе паллашрăм та вĕсем патĕнче кăна пулаттăмччĕ, халăх хушшине урăх çĕре тухса çӳреместĕмччĕ. Глазовсенчен виççĕшĕ гимназире пĕлӳ пухатчĕç. Эпĕ улттăмĕш класа куçсан кĕçĕннисенчен иккĕшĕпе пĕрле вĕрентĕм. Вĕсен кил-йышĕ чăн-чăн вырăсласкерччĕ, тĕне ĕненетчĕ, ырă кăмăллăччĕ, çутта тухнăскерччĕ, çăкăр-тăвартан тараватчĕ. Малтан пуян помещиксем пулнă Глазовсем ача-пăчана пĕлӳ парса, хăна-вĕрлене, уйрăмах яш-кĕрĕме вĕçĕм сăйласа юхăнчĕç. Манăн куç умĕнчех вĕсем Самара кĕпĕрниччи виçĕ имениие сутса ячĕç. Хăйсен вара Чĕмпĕр кĕпĕрниччи именисен пĕр пайĕ çеç тăрса юлчĕ.

Глазовсен килĕ пысăках мар пулин те, кунта Чĕмпĕрти чи паллă çынсем пухăнатчĕç. Вĕсем патĕнче эпĕ Языковсене, Поливановсене, Карповсене тата паллă вырăнта ĕçлекен ытти çынсене тĕл пулаттăм.

Кунта чапа тухнă Гончаров çыравçăн пĕртăван пиччĕшĕ те пулкалатчĕ. Вăл Чĕмпĕр гимназийĕнче кĕçĕн классене вырăс чĕлхи вĕрентетчĕ. Каярах эпĕ ăна çывăхрах пĕлекен пултăм. Аслă пĕлӳ илнĕскер акăлчанла, французла тата нимĕçле лайăх калаçатчĕ, Глазовсен

килне пынă çынсемпе çав ют чĕлхесемпе ирĕккĕн хутшăнатчĕ. Гимназире вĕреннĕ чухне Глазовсен пĕр ывăлĕпе пĕрле эпĕ Гончаровсем патне темиçе хутчен те кĕрсе тухсаттăм. Николай Александровичпа калаçма интереслĕччĕ, вăл хавас та тикĕс кăмăллă çынччĕ, хăйне ыттисенчен нимĕнпе те уйăрса тытмастчĕ.

Уявсерен эпĕ Глазовсен килĕнче хăнара пулаттăм. Ардалион Иванович, ватăскер, отставкăри гварди полковникĕ, çитмĕле çитсе пыратчĕ. Хăй урçаччĕ. Вĕсен патĕнче кăмăллă сăн-питлĕ карчăк, унăн аппăшĕ Анна Ивановна Политковская, пурăнатчĕ. Вăл тăлăх арăмччĕ, йăвашрах илтетчĕ. Хăй пăхса çитĕнтернĕ Катенька ятлă дворянкăпа ĕмĕр ĕмĕрлетчĕ. Глазовсен пилĕк ачаччĕ — тăватă ывăл та Александра Ардалионовна ятлă хĕр пурччĕ. Вăл ăслăлăх енĕпе те чаплă пĕлӳ илнĕччĕ, француз, нимĕç, акăлчан чĕлхисене питĕ лайăх пĕлетчĕ, чикĕ леш енче чылай çӳренĕ.

Ăна пĕтĕм кил-йышăн шăнăрĕ тесе шутлама пулатчĕ. Вăл хăйне тирпейлĕ те йĕркеллĕ тыткаласшипе, тĕрлĕ енлĕ пултарулăхĕпе мĕн тери тĕлĕнтерме пултарнине каласа пама та йывăр. Мана, сăмахран, çыннăн сапаланма, вакланма юраман пек, яланах тимлĕрех пулмалла пек туйăнатчĕ. Халĕ, Глазовăна асилнĕ май, çапла шухăш тĕвĕленет: Александра Ардалионовна пурин кăмăлне те каяс, кашнинех усă кӳрес тесе хăйĕн пултарулăхне ахалех сапаласа пĕтернĕ.

Кăмăл-сипетпе вĕрентӳ усса кайтăр тесе Глазовсем хăйсен ачисемпе юлташлă пулма хулари гимназипе тĕн семинарийĕнчи лайăх вĕрентекенсене йыхăрса пухатчĕç. Пĕрле килти спектакльсем лартатчĕç, музыка каçĕсем ирттеретчĕç, классика хайлавĕсене вулатчĕç. Кунта та Александра Ардалионовна тĕп вырăнтаччĕ. Тата вăл килти сцена çинче ăста вылятчĕ. Вĕсем патĕнче ирттерекен спектакльсене тата ытти хаваслă вăййа эпĕ сахал хутшăнаттăм. Хам ун чухне чăваш йăхне çутта кăларас тесе ĕмĕтленсе тăни çинчен манăн,

ахăртнех, Глазовпа калаçма тÿр килнех. Вăл ăш пиллĕн итленĕ пулĕ-тĕр ку хыпара. Шкул уçас ĕçре Ардалион Иванович мана укçа-тенкĕпе пулăшрĕ. Пулăшма ыйтса хут çине ал пустарса çÿрерĕ, килти спектакльсенчен пухнă тупăшăн пĕр пайне пачĕ.

Глазовсем ун чухне Шатровсен çуртĕнчен инçех мар, Стрелецсен урамĕнче пурăнатчĕç. Вĕсен каçĕсенче Чĕмпĕрти чи хÿхĕм хĕрсем пулатчĕç. Эпĕ çак çемьене гимназире юлашки икĕ çул вĕреннĕ чухне çÿрерĕм. Глазовсен кил-йышĕпе хутшăнса пурăнни пурнăçăма пысăк усă кÿчĕ: мĕн ачаран вăтанчăкскер, культурăллă çынсем патĕнче хама тыткалама хăнăхрăм, йĕркеллĕ кил-йыш йăли-йĕркине вĕрентĕм.

## ТĔНЕ СИВЛЕНИ

Гимназире вĕреннĕ чухне тĕне ĕненес кăмăлăм питĕ хĕрÿччĕ. Вăхăт-вăхăт иккĕленесси те пулкалатчĕ, çапах эпĕ чиркÿпе ун йăли-йĕркине сивлемен, ку шухăшăм кайран та пулман. Манăн юлташăмсене те тĕн ыйтăвĕ питех шутлаттармастчĕ. Чĕмпĕрте чухне унчченхиллех чиркĕве çÿреттĕм, тип тытаттăм, анчах ăна Мушкеевсен килĕнчи пек çирĕп пăхăнмастăм. Ку тĕлĕшрен мана Глазовсемпе Раевскисен пурнăç йĕрки витĕм кÿрсе тăчĕ, унта Мăнкун типпине çеç тытатчĕç.

Чĕмпĕрти гимнази чăнах та нумай ăс пачĕ. Унта вырăсла ăнланса вулама хăнăхнипе, тĕрлĕ енлĕ пĕлÿ илнипе пĕрлех эпĕ чăн тĕне шкулта вĕренсе пымаллине, манăн хамăн та чăвашсемпе пĕр ушкăнрах тăмаллине ăнкартăм.

## ЭПĔ — РЕПЕТИТОР

1869 çулхи çурла уйăхĕ тĕлне эпĕ хулара лайăх репетитор шутланаттăм. Хулари ял хуçалăх обществи ферма тытса тăратчĕ. Çав общество секретарĕ Василий Васильевич Черниковчĕ. Вăл «Симбирские губернские



ведомости» хаçатăн официаллă мар пайĕн редакторĕ пулса ĕçлетчĕ. Пирĕн гимнази директорĕнчен Иван Васильевич Вишневскирен хăйĕн хĕрарăмсен гимназийĕнче вĕренекен хĕрĕсем валли репетитор пулма кама сĕнессине ыйтса пăхнă. Лешĕ ман ятăма асăннă.

Эпĕ хайхи Черников патне çитрĕм. Вăл мана хăй патĕнче ывăлĕпе пĕр пӳлĕмре хваттерте пурăнма сĕнчĕ, апат-çимĕçе те хатĕрлесе пама пулчĕ, хĕрĕсене вĕрентнĕшĕн уйăхсерен çирĕм пилĕк тенкĕ тӳлеме килĕшрĕ. Çывăх юлташсемпе Панаевпа тата Соколовпа канашланă хыççăн эпĕ килĕшес тесе шутланăччĕ.

Анчах ку ĕçе Левашов хутшăнчĕ: вăл эпĕ урăх çурта куçнăшăн кӳреннĕ-мĕн. Купса та мана хăй патĕнче усрама, репетиторта тытма хатĕр иккен. Черникова маларах сăмах панăран эпĕ унăн сĕнĕвĕсене йышăнмарăм. Апла пулин те манăн Василий Васильевич патне куçасси пулмарĕ. Унăн арăмĕ, Чĕмпĕр кĕпĕрнат-

тăрĕн хĕрĕ, хайне мăнна хураканскер, килĕнче чăваша тытма килĕшмерĕ. Мана ĕçлеме илмерĕç.

Кун çинчен эпĕ Вишневские пĕлтертĕм, ăна Левашов сĕнĕвĕ пирки хыпарларăм. Вăл мана ун сĕнĕвĕпе килĕшме хушрĕ. Эпĕ Левашов патне кусрăм. Манпа пĕр пÿлĕмри Соколов, Панаев, Рекеев, Кашкаров, Исаев эпĕ Мясоедовсен çуртĕнче илнĕ хваттерте пурăнма пуçларĕç. Вĕсене унчченхиллех хам шутран тытса тăраттăм.

Çити-çитми укçа-тенкĕпех эпĕ хваттере чип-чипер сĕтел-пукан туянса патăм. Çакă маншăн уйрăмах сисĕмлĕ те йывăр пулчĕ. Юрать-ха репетитор ĕçĕпе самаях укçа илме тытăнсаттăм. Ялтан чĕнсе илнĕ юлташăмсене вĕренÿре эпир — Соколов, Панаев тата эпĕ — унчченхиллех пулăшса пытăмăр. Пĕтĕм ĕçе хавасланса, чунтан юратса тăваттăм: мана вĕсемшĕн тăрăшма кăмăллăччĕ.

Панаев хресчен, Соколов мещен кил-йышĕнченччĕ. Çамрăксенчен чи талантли, çивĕч куçли, шахвăртма юратаканни — Панаевчĕ. Вăл ют чĕлхесене, уйрăмах нимĕç чĕлхине, аван пĕлетчĕ. Кашкаровпа Исаев уес шкулĕнче класран класа йĕркипе куçса пыратчĕç. Рекеева манăн ăнаçлăрах хатĕрлеме тÿр килчĕ, вăл пĕрремĕш класран тÿрех виççĕмĕшне куçрĕ. Уес шкулне пĕтерчĕ те ялтан килнĕ юлташăм ун çумĕнчи ятарлă педагогика курсне вĕренме кĕчĕ.

Хам пуçарнипе тата хам шутăмран йĕркеленнĕ çак пĕрлешÿллĕ йыш Чĕмпĕр чăваш шкулне ÿссе çитĕнме акнă вăрлăх пулчĕ. Хусан университетне кайсан эп чăмăртанă пĕчĕк шкул хам çине тăнипе тата ытти ырă çынсем пулăшнипе малалла аталанчĕ.

## ТУПМАЛЛИ


*Куçаракан сăмахĕ* . . . . . . . . . . . . 3

АЧАЛĂХĂМ . . . . . . . . . . . . . . . 5

ПĂРĂНТĂКРА . . . . . . . . . . . . . . 19

ЧĔМПĔРТИ ШКУЛ . . . . . . . . . . . . 33

ГИМНАЗИРЕ . . . . . . . . . . . . . . 47

Литературно-художественное издание

*Для детей среднего и старшего школьного возраста*

**Яковлев Иван Яковлевич**

**ÇИТĔННĔ ВĂХĂТ**

**ПОРА ВЗРОСЛЕНИЯ**

**Воспоминания**

*На чувашском языке*

Перевод на чувашский язык *Г.Ф. Юмарта*

Редактор *О.Л. Федорова*
Художник *С.А. Бритвина*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *А.В. Семенова*
Корректоры *З.И. Гаврилова, Н.В. Вечеркина*
Компьютерная верстка *Е.В. Ивановой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Подписано к печати 21.04.10. Формат 60х90 $^{1}/_{16}$. Бумага офсетная.
Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 4,0. Уч.-изд. л. 2,64.
Тираж 2000 экз. Заказ № К-3100. Изд. № 29.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии. 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия». 428019, Чебоксары,
пр. Ивана Яковлева, 13.

40.00

Вĕренсе çутăлма телей тупнă
чăвашсене калам...
...тăван халăхăра эсир пулăшса
пурăнмалла; вĕсене ăçтан та
пулин катаран пулăшу килĕ-ха
тесе тăмалла мар...
Вĕренӳлĕх пĕлсе тăракан пурлăха
пуçтарса эсир хăвăрăн
тăван халăхăр патне таврăнăр,
вара патшалăхăр
чăн лайăх этем мĕнле пулмалли
çинчен вĕсене каласа
ăнлантарăр; закон çинчен тата
халăх хушшинче пулмалли
тӳрĕлĕх çинчен вĕрентĕр.
Çакăншăн тăрăшассине эсир
хăвăр çине илмелле:
эсир çав халăх
хушшинчен тухнă çынсем.

И. Яковлев

Чăваш
кĕнеке издательстви